Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АПРЕЛ 20 ЙУНКУН 90 (4903)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Пысăк ĕçсен программи

Пайан епĕр Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн X-мĕш Çессийĕ Чăваш АССР халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планĕ çинчен йышăннă постановленисене пичетлесе кăларатпăр. Çакă, политикăпа хуçалăх йĕнчен пысăк вырăн йышăнакан документсем Совет çĕршывĕн тĕрекĕпе пуйанлăхĕ, совет халăхĕн никам та нихăçан та çĕнтерейми вăйĕ çинчен тӳррĕн те уççăн калаçа параççĕ. Халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планĕн кашни пункчĕ Ленинпа Сталин партийĕ, совет влаçĕ ĕççыннисен пурнăçне лайăхлататассишĕн, культурине çĕклессишĕн сталинла йурапа тăрăшни çинчен каланипе тулнă.

Халăх хуçалăх планĕн никĕсĕнче—Совет государствин социалисăмла саккунĕ—Сталинла Конституци, ленинла-сталинла наци политикĕн иксĕлми хăвачĕ тăрать. Халăх хуçалăх планне хамăр республик хуçалăхне, культурине çĕклес йĕнĕпе ку таранччен ӳсĕмсене шута илни тăрăх тунă. Планра пирĕн республика Совет влаçĕ пулнăранпа чечекленекен промышленнăçлă, йалхуçалăхлă, культурлă çĕршыв пулса тăни уççăнах курăнать.

Иртнĕ çулта республика промышленнăçĕн продукци хисепĕ 11,8 процент, кооперации промышленнăçĕн продукци хисепĕ 9,2 процент тата районсенчи промышленнăç продукци хисепĕ 17,3 процент ӳснĕ. Ĕç тухăçлăхĕ те чылай ӳснĕ.

Йалхуçалăхĕ çулран çул хăвăрттăн малала кайать. Йалăн сăн-сăпачĕ тĕпренех улшăнчĕ. Социалисăмла йĕрке, социалисăмла ĕçлев тата йалхуçалăхне пысăккăн механизацилени—пысăк тухăçлă тырпул туса илме майсем пачĕç. Иртнĕ çулта пирĕн республика вăтам шутпа гектартан 15,6 центнĕр тырă туса илнĕ. Сталин йулташ: пур колхозниксене те пуйан та культурлă пурăнакан тумала, тени пурнăçа кĕрсе пырать.

Халăх хуçалăхĕ ӳснĕ никĕс çинче ĕççыннисен пурнăç условийĕ те кунсерен лайăхланса, культурланса пырать.

Пирĕн республика халăх хуçалăхне вăйлатас, культурăна çĕклес, ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатас йĕнĕпе тунă ӳсĕмсем питех те пысăк. Халăх тăшманĕсен—троцкисла-бухаринла елементсен, буржуала националиссен сăтăрлă ĕçĕсем пулман пулсан, вăл ӳсĕмсем тата та пысăкрах пулнă пулĕччĕç. Тăшмансен йавине уçса çĕмĕрсе тăкнă. Халĕ пирĕн задач—тăшмансене пĕр çын хăварми пĕтересси, вĕсен сийенлĕ ĕçĕсен йулашкисене хăвăрттăн пĕтерессi пулать.

Кăçал промышленнăçа вăйлатма 40 мĕлйун тенкĕ ытла хывма палăртнă. Ку иртнĕ çулхипе танлаштарсан виçĕ хут йахăн ӳсни пулать. Çав укçа-тенкĕпе çĕнĕрен савăтсем тумала, халĕ ĕçлекен предприйатисене пысăклатмала. Шупашкар хули вăйлă промышленнăç никĕсĕ пулать. Çĕмĕрлери, Улатăрти, Канашри промышленнăç предприйатисене ӳстерсе вăйлатмала. Сланĕцпа торф кăларас ĕçе пысăккăн тума пуçламала. Коммуналлă хуçалăха вăйлатмала, çыхăну, суту-илӳ, çулйĕр ĕçĕсене пысăккăн сармала. 1938 çулта пĕтемпе 73.049,7 пин тенкĕлĕх капитальнăй ĕççем тăвассине пурнăça кĕртмеле.

Халăх хуçалăх планĕнче ĕç тухăçлăхне ӳстерес, продукци пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк ĕççем тума палăртнă, продукци кăларассине вăйлăн ӳстерме пăхнă. Государствă промышленнăçĕн 63.754 пин тенкĕлĕх продукци кăлармала, пĕлтĕрхинчен 7 мĕлйун та 724 пин тенкĕлĕх ытларах.

Йалхуçалăх умĕнче тăракан чи кăла та ответлă задачă вăл—гектартан 100 пăтран кайа мар тырă туса илесси пулать. Вăл задачăна пурнăça кĕртме пусуçавранăш, сортлă вăрлăх ыйтăвĕсене анăçлăн татса памала, агротехникăлă ĕççене вăхăтра, пысăк пахалăхпа туса пымала, çуракине лайăх иртермеле. Апла пулсан, пирĕн нихăçанкинчен те тимлĕн ĕçлемеле, Тутар тата Мордва республикĕсемпе тухăçа ăмăртура мала тухассишĕн хастарлă кĕрешмеле.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес йĕнĕпе те пысăк ĕççем тумала. Пирĕн çывăх вăхăтрах кашни колхозник хуçалăхне ĕне тата ытти выльăх тытакан хуçалăх тумала. Йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешесси вăл—чăн малтан—патшалăх планне тултарса пырассине, выльăх апат ыйтăвне кĕске вăхăт хушшинче татса парассине, пĕтĕм выльăхсене ăратлатса çитерессине пĕлтерет. Çак ĕççем халăх хуçалăх планĕнче паллă вырăн йышăнса тăраççĕ.

Йединоличник хуçалăхĕсене колхоза кĕме пулăшас йĕнĕпе те пысăк ĕççем туса иртермеле.

Кăçалхи план тăрăх транспортпа çыхăну, сывлăха сыхлав, суту-илӳ, çуртйĕр строителстви йĕнĕпе пысăк ĕççем тума палăртнă. Программă пысăк. Çав пысăк программăна пурнăçа большевикла кĕртессишĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешесси—кашни рабочипе работницăн, кашни колхозникпе колхозницăн, пĕтĕм интеллигенцин чыслă та хисеплĕ задачĕ пулса тăрать.

Халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планне вăхăтра, ăнăçлăн пурнăça кĕртме иртнĕ çулхи ĕçсенчен тивĕçлĕ уроксем туни кирлĕ. Иртнĕ çулта халăх хуçалăх планне чылай ĕççем йĕнĕпе тултарайман. Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçула, колхозсенчи електростанцисене туса пĕтереймен. Промышленнăç строителстви пурнăçа кĕмесĕр йулнă, финанс ĕçĕнче пысăк прорыв пулнă, йалхуçалăх продукцисем хатĕрлессипе çителĕксĕр ĕçленĕ. Республика бӳджетне тупăш пайĕ йĕнĕпе 10 мĕлйун тенкĕ йахăн кайа тултарнă. Çакăн пек çитменлĕхсем кăçалхи ĕçре пулмала мар.

Халăх хуçалăх планне тултарма бӳджета çирĕппĕн тытса пыни кирлĕ. 1938 çулти бӳджета пĕтĕмпе 129 мĕлйун та 820 пин тенкĕ йахăн йышăнна, урăхла каласан, кăçалхи бӳджет иртнĕ çулхинчен 14 мĕлйун тенкĕ ытла пысăкрах. Вăл хисепрен пĕр çутĕçпе сывлăх ĕçне кăна 89 мĕлйун та 796 пин тенкĕ ытларах каймала.

Бӳджета тултарас ĕçе татса пама кирлĕ условисенчен пĕри вăл—кадрсем, финанс ĕçĕн техникине алла çавăрса илнĕ кадрсем, вĕсене большевикла вĕрентсе пырасси пулать. Пĕтĕм советпа хуçалăх, кооперацине общĕствăлă организаци руководителĕсен çирĕп финанс дисциплинишĕн кĕрешмеле. Финанс аппаратне сăтăрçăсенчен, жуликсенчен, пĕтĕм тăшмансенчен тасатса плана куллен кун тултарса пыракан тумала. Ĕçе çакăн пек организацилесен çеç 1938 çулхи бӳджета ăнăçлăн пурнăça кĕртме пулать.

ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавĕ рабочисемпе колхозниксен, пĕтĕм интеллигенцин политикăпа производствăлă активлăхĕ калама çук пысăккăн çĕкленнине, пĕтĕм ĕççыннисем Ленин — Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн тăнине, тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсен йулашкиçене пĕтерме пултаракан, хуçалăхпа культурă строителствине малала хăвăрттăн ӳстерме пултаракан кадрсем мĕлйуншарăн ӳссе çитнине кăтартрĕ. Çак кадрсене йертсе пырас вырăнсене хăйулăн лартса, вĕсене руководствă ĕçне вĕрентсе халăх хуçалăхĕн планне пур йĕнчен те пурнăça кĕртме пултаракан кадрсем тумала.

1938 çула кĕнĕренпе пĕрремĕш квартала иртерсе иккĕмĕш кварталa кĕтĕмĕр. Анчах апла пулсан та, чылай çĕрте епĕр хамăрăн ĕççене 1938 çулхи халăх хуçалăх планне тивĕçлипех тултарса çитермеле таран çĕнетсе йанă теме пултараймастпăр-ха. Уйрăмăнах ĕççем çĕнĕ строителствăсене тытăнасси йĕнĕпе питех те кайа йулнă. Советпа хуçалăх, кооперацине общĕствăлă организаци руководителĕсен çакăнтан хăйсене вальли тивĕçлĕ вывăдсем тумала. Халĕ тумали ĕçсене çулана, кĕркуннене хăвармала мар. Пирĕн пайан ĕнерхинчен лайăхрах, ыран пайанхинчен те лайăхрах ĕçлемеле. Штурмăла ĕç меслечĕсене татăклăн пĕтермеле.

Ĕçĕн ăнăçлăхне татса парасси—массăсĕн опычĕсене шута илни, ыйтăвăн тĕрĕс решенийĕсене тупни, массăсем пулăшнипе вăл решенисене пурнăça кĕртмеле туни тата çав решенисене ĕçе кĕртсе пынине тĕрĕслесех тăни тăрăх организациленинче.

Ĕç программи пур. Халĕ ĕнтĕ партипе совет организацисĕн çак программăна масса патне çитерсе, пĕтĕм рабочисемпе колхозниксене тата интеллигенцине социалисăмла ăмăртăва хутшăнтарса, массăлă стахановла йухăма анлăн сарса халăх хуаçлăхĕн 1938 çулхи планне тата республика бӳджетне ытлашшипех тултармала тăвас пулать.

Азербайджан искусствин вунăкунлăхĕнче пулнисене Кремлре йышăнни

Апрелĕн 17-мĕшĕнче Азербайджан искусствин вунăкунлăхĕнче пулнисене партипе правителства руководителĕсем (Кремлре) йышăннă. Кремлри Пысăк Дворецри йышăнура вунăкунлăхра пулнисем, Мускаври предприйатисенчи стахановĕцсем, искусствă маçтарĕсем—артиссем, композитăрсем, художниксемпе писателсем, çавăн пекех ăслăлăхпа пичет работникĕсем пулнă.

И. В. Сталин, В. М. Молотăв, Л. М. Каганович, К. Йе. Ворошилăв, М. И. Калинин. В. Й. Чубарь, А. И. Микойан, С. В. Косиор, А. А. Жданăв, Н. И. Йежов, Г. И. Петровский, Р. И. Ейхе, Г. М. Димитров, М. Д. Багирăв йулташсем зала пырса кĕрсен, залăра тăвăллăн алă çупни кĕрлесе кайнă. „Урра" кăшкăрни, азербайджан тата вырăс чĕлхипе саламласа кăшкăрни нумайччен йанраса тăнă.

Вечĕра ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусствă ĕçĕсен Комитечĕн председателĕ А. И. Назарăв йулташ уçнă.

Назарăв йулташ Азербайджан ССРеспубликĕн талантлă, ирĕклĕ халăхĕшĕн, унăн калама çук паха искусствишĕн, совет Азербайджанĕн искусствă работниксемшĕн тост калать.

Унтан Азербайджан искусствин вăтă дейателĕ Узеир Гаджибекăв композитăр сăмах тухса каланă. Вăл ирĕклĕхшĕн кĕрешнĕ çĕрте Азербайджан халăхĕсене аслă вырăс халăхĕ пулăшни çинчен каласа панă.

— Епĕ,—вĕçленĕ хăйĕн сăмахне Гаджибекăв йулташ,—большевиксен паттăр партийĕшĕн, халăхсен çулпуçĕшĕн Сталин йулташшăн бокал çĕклетĕп.

Пĕтĕм зал тăрăх „урра" кăшкăрни тата саламлă сăмахсем калани йанраса кайнă.

В. М. Молотăв йулташ пĕтĕм зал оваци тунипе тост каланă:

— Сывă пултăр совет Азербайджанĕ, унăн паха та илемлĕ искусстви, унăн творчĕствăла вăйĕсем! Урра!

Хумханулă сăмахпа Азербайджан халăхĕн пирвайхи артистки Шевкет Мамедăвă тухса каланă.

— Епĕ тăванла вырăс халăхĕшĕн, унăн мухтавлă ывăлĕшĕн, Сталин соратникĕшĕн—Вячеслав Михайлăвич Молотăвшăн бокал çĕклетĕп,—тесе вĕçлет хăйĕн сăмахне Шевкет Мамедăвă. Каллех тăвăллăн алă çупни йанраса кайат.

В. М. Молотăв йулташ çапла каланă:

— Сывă пултăр пирĕн Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ! Сывă пултăр Азербайджанри коммуниссен большевиксен партийĕ! Азербайджан большевикĕсене йертсе пыракан Багирăв йулташăн сывлăхĕшĕн—урра!—тенĕ.

Залăра „урра" кăшкăрни йанраса кайат.

Совет Союз çĕмйипе пĕрлешнĕ халăхсен сталинла туслăхĕ çинчен Кнарик Григорйан солисткă каланă. Вăл ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиум Председателĕшĕн М. И. Калинин йулташшăн тост каланă.

ССР Союзĕн халăх артисĕ Л. М. Леонидăв пĕтĕм çĕтемлĕхĕн социалисăмлă культуришĕн, пирĕн социалисăмлă хăватлă тăван çĕршывшăн, никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çаршăн тата унăн çулпуçĕшĕн—шанчăклă сталинĕцшĕн, Совет Союз Маршалĕ К. Йе. Ворошилăв йулташшăн тост каланă.

Йулашкинчен йышăнура пулнисене пысăк концерт лартса кăтартнă.

(ТАСС)

Наградăсем панă

Кийеври Государствă консерваторийĕ 25 çул тултарнă йатпа тата Совет Украинин музыка кадрĕсене хатĕрлес çĕрте калама çук пысăк тава тивĕçлĕ ĕççем тунăшăн ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕ Кийеври Государствă консерваторине Ленин орденĕ парса наградăланă. Кунсăр пуçне консерваторинчи 17 профессăрпа доцента Союз орденĕсем тата ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн хисеплĕ граматисем парса наградăланă.

* * *

Медицинă ĕçĕнче калама çук пысăк тава тивĕçлĕ ĕççем тунăшăн ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕ Владимир Петрович Филатăв профессăра Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕ парса наградăланă.

(ТАСС).

23 центнĕр клевĕр вăрлăхĕ çитмест

КАНАШ, апрелĕн 19-мĕшĕ (телефонпа). Апрелĕн 18-мĕшне районĕпе пурĕ 613 гектар клевĕр акса хăварнă. Кĕрхи тырă калчисем çине клевĕр акмали плана районра чи малтан Йаманăвăри колхоз (40 гектар), „Хĕрлĕ çăлтăр" колхоз (35 гектар) тата „Мотор" колхоз (65 гектар) тултарчĕç. Кунсăр пуçне çав колхозсенчен Йаманăвăри колхоз 85 гектар, „Хĕрлĕ çăлтăр"—35 гектар, „Мотор"—69 гектар çинче кĕрхи тырă калчисене апат панă.

Чылай колхозсем викă вăрлăхне йаровизацилеме хунă, пайантан пуçласа тĕштырă вăрлăхĕсене йаровозацилеме тытăнаççĕ. Пайан куна районĕпе пурĕ 213,5 тоннă вăрлăх типĕлле майпа вутпуççирен тасатнă. Вăл шутран 86 тоннă районри Осоавиахим организацийĕ тасатса панă.

Çĕнĕ агротехникăлă ĕçсенчен кăçал уйрăмăнах нитрагинпа усă курасси анлăн сарăлмала, пурĕ 320 гектар вальли нитрагин илсе хатĕрленĕ.

Апрелĕн 16-мĕшĕнче районра бригадирсем, йаровизатăрсем, çейалкăпа ĕçлекенсем тата ыттисем пĕр кунлăх çеминарта пулчĕç. Вĕсене кашнинех кăçал мĕнле ĕçлемели çинчен кĕскен каласа панă.

Анчах районра пĕр пысăк çитменлĕх пур, вăл—клевĕр вăрлăхĕ çитменни. Кĕрхи тырă калчисем çине клевĕр акмали плана тултарма района пурĕ 23 центнĕр клевĕр вăрлăхĕ кирлĕ. Ăна халь Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчен ыйтса йанă.

Районри Çĕрĕç пай пуçлăхĕ НИКОЛАЙĔВ.

* * *

ШĂХАСАН. Колхозсенчен чылайĕшĕ клевĕр акмали плана тултарчĕç. Çав хушăрах хăшпĕр колхозсем клевĕр акма васкамаççĕ, вăрлăхсене те хатĕрлемен. Пайан куна Шуркасси колхозĕнче 6 центнĕр, çавăн пекех тата Троицкăри, Ухманти тата Шмидт йачĕпе тăракан колхозсен те клевĕр вăрлăхĕсем çитмеççĕ. Клевĕр акмали плана тултарма районĕпе пурĕ татах 33 центнĕр клевĕр вăрлăхĕ кирлĕ.

В. Ч.

Турхан районĕнче

Районта малта пыракан „Красное Дименево", „Путь социализма" колхозсем апрелĕн 15-мĕшĕнче çураки сухине тухрĕç.

* * *

Пăлапуç-Нурăс йалсоветне кĕрекен „Смычка" колхозри колхозниксем урам хушшине илемлетме тытăнчĕç. Халь колхозниксем пӳртумĕсене йăвăççем лартаççĕ. Кунсăр пуçне урам икĕ йĕнĕпе хăма сарса тротуар тăваççĕ.

Çĕрулмине йаровизацилеме тытăннă

ТРАК. Упири „Коминтерн" колхозри бригадăсем çуракине тухма хатĕр тăраççĕ. Халь вĕсем кĕрхи калчасене 4 гектар çинче суперфосфат, 2 гектар çинче тислĕк шĕвекĕ сапса апат пачĕç. Кунпа пĕрлех 30 гектар кĕрхи çĕртме сухине сӳрелерĕç.

Колхозри Михайлăвпа Çтепанăв йаровизатăрсем хăйсен ĕçĕсене тума тытăнчĕç. Çак кунсенче вĕсем 125 пăт çĕрулми йаровизацилеме хучĕç. Çавăнпа пĕрлех вĕсем тĕштырă вăрлăхĕсене йаровизацилеме хатĕрленеççĕ. М. Иванов.

36 колхоз клевĕр акса пĕтернĕ

Йĕлчĕк, (телефон тăрăх). Апрелĕн 16-мĕшĕ тĕлне районĕпе 2 пин гектар çине клевĕр акнă. 36 колхоз клевĕр акса пĕтернĕ. Халь колхозсем вăрлăхсене йаровизацилес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. 1190 центнĕр тулă вăрлăхне протравит тунă, 1322 центнĕр сĕлĕ вăрлăхне йаровизациленĕ.

Апрелĕн 16-мĕшĕнче „Молот" колхозăн пур бригадисем те çуракине тухрĕç. „Хĕрлĕ Тимĕш" колхоз 20 гектар çине тулă, 16 гектар çине сĕлĕ акнă.

Орденоносĕц Павлăв йулташ бригади трактăрсемпе 20 гектар сухаланă. Çак бригадăри Кармаликăв трактăрис çменăра 5,45 гектар сухаласа, нормăна 120 процент тултарнă.

Районра пайан-ыран масăлă акана тухмала. Анчах райçĕрĕç пайĕ ку вăхăта çитсе те гектар çине мĕн чухлĕ вăрлăх акмали çинчен колхозсене кăтарту паман.

Ф. Майков.

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Ебро йуханшывĕнчен кăнтăр йĕнчи районра (хĕвелтухăçри фронт) пăлхавçăсемпе Итали интервенчĕсем, пысăк вăйсене пĕр çĕреле пухнă хыççăн, Винарос çине (Вăтаçĕрти тинĕс çыранĕ хĕрринчи порт) наступлени тунă. Апрелĕн 15-мĕшĕнче фашиссем Винаросе, Беникарлона (Винаросран кăнтăрала) тата Ульдекон йатлă йала йышăннă. Вĕсем çак хуласемпе йалсем çине тĕтĕм йарса, унăн хӳттипе пырса огнеметсем пăрахса наступлени тунă. Республика çарĕсем пĕр пăтрашăнса каймасăр, йĕркеленĕх кайала чакнă, вĕсем вăрçă хатĕрĕсен запасĕсене те хăйсемпе пĕрлех илсе кайнă.

Ульдекон йатлă йал патĕнче хайар çапăçусем пыраççĕ. Республика самольочĕсем фашиссен чаçĕсем çине бомбăсем пăрахаççĕ тата вĕсене пулеметсемпе переççĕ.

Винаросе йышăннă хыççăн фашиссем Вăтаçĕрти тинĕс çыранне тухнă.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

* *

Испанин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Альварес дел Вайо çапла каланă: республика правителстви республикăла Испанин ытти пайĕсенчи çарĕсемпе пĕрле тăшмана хирĕç вăрçма пур кирлĕ мерăсене те йышăнчĕ,—тенĕ.

(ТАСС).

Йапони империалисĕсен тискерлĕхĕ

Официаллă пĕлтерӳсем тăрăх, мартăн 27-мĕшĕнчен пуçласа Йапони авиацийĕ Учан хули çине (Хубей провинци) 24 хутчен пырса бомбăсем пăрахнă. Çак вăхăт хушшинче Йапони летчикĕсем пурĕ пин ытла бомбă пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе 643 çын вилнĕ тата 955 çын аманнă. Вĕсем хушшинче çамрăк ачасем—30. (ТАСС).

РЕСПУБЛИКĂЛĂ ИСПАНИРЕ

Каталонири хресчĕнсем республика çарне вальли тырă параççĕ.

(Союзфото).

Румынире фашисла „тимĕр гварди" членĕсене арĕслени

Бухарестра (Румыни) фашиссен „тимĕр гварди" текен партин паллă пуçлăхне—Кодреануна арăсленĕ. Унпа пĕрле çав организацинчи активиссене 200 çынна арĕсленĕ. „Тимĕр гварди" членĕсене арĕслесси пĕтĕм Румынипех пулса пырать. Полици тупса палăртнă тăрăх, фашиссем Бухарест çине поход тума хатĕрленĕ. Шырана чухне вĕсенне хĕçпăшалсем, вăрçă хатĕрĕсем, „тимĕр гварди" Румынире фашисла переворот тума хатĕрленнине кăтартса наракан листовкăсемпе документсем тупнă.

Йулашки хыпарсем тăрăх Румынире „тимĕр гварди" организацин членĕсене пурĕ 1.665 çынна арĕсленĕ. Арĕсленисем хушшинче 8 çвашченник. (ТАСС).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

(Апрелĕн 11-мĕшĕнче 18-мĕш хушшинчи вăрçă ĕçĕсене цăхса тухни).

Китай çарĕсем Тайерчжуан патĕнче (Шаньдун провинци) çĕнтерне хыççăн, çав районта пысăк çапăçусем пулман. Китай çарĕсем Иçаньпа Теңçань хулисенче йапонĕцсене хупăрласа илсе, вĕсене çав хуласенчен ниçта кăлармасăр тытса тăраççĕ. Партизансен отрйачĕсем, Йапони çарĕсем хупăрласа илнине пăхмасăр, вĕсен тылне флангсенчен пырса кĕрсе, çулсене çĕмĕрсе тăкнă. Партизансен отрйачĕсем Йапони подкрепленийĕсене Шаньси провинцин кăнтăр пайне малала кайма тытса чарса тăраççĕ.

Иçань хули патĕнче китайĕцсем йапонĕцсене хытăрах та хытăрах хĕссе пыраççĕ. Хальхи вăхăтра вĕсем хула хапхисем патнех çитсе тăнă. Йапонĕцсем Китай çарĕсем хупăрласа илнинчен тухса тарма хăтланаççĕ, анчах вĕсен ĕçĕ пĕртте ăнмасть. Тытăçса çапăçнă чухне икĕ кун хушшинче кăна йапонĕцсен 700 салтак пĕтнĕ.

Китай çарĕсем ниçта кăлармасăр тытса тăракан Йапони çарĕсем вăрçă хатĕрĕсем çитменнипе тата апат-çимĕç çитменнипе хытă аптраççĕ. Хальхи вăхăтра Йапони командованийĕ Иçаньрен çурçĕрпе хĕвелтухăçнели Ичжоу районне çĕнĕрен çарсем илсе пырать. Вĕсем Китай çарĕсем хупăрласа тăракан хула патне хĕвелтухăç йĕнчен пыма шутлаççĕ.

Шаньси провинцин хĕвеланăç пайĕнче Китай çарĕсем ăнăçлă контрнаступлени туса пыраççĕ. Йулашки вăхăтра вĕсем Йунхе, Данкин, Цвиçань тата ытти пысăк хуласене те захватчиксенчен тасатнă.

Шаньси провинцинче йапонĕцсен пысăк çухатусем пулса пыраççĕ. 22 кун хушши вăрçнă хушăра йапонĕцсен, вилнисемпе аманнисене пĕрле илсе шутласан, 15 пин салтак пĕтнĕ. Китайĕцсем йапонĕцсенчен 2.300 винтовка, 7 тупă, 30 грузовик, 5 вакун амуници тата 500 лаша туртса илнĕ.

Центрти фронтра ытлашши пысăк улшăнусемех çук. Кунта партизанла йухăм кунран кунах ӳссе, вăйланса пырать. Йулашки кунсенче партизансем Шанхай çывăхĕнче вăрçаççĕ, вĕсем Йапони захватчикĕсене пысăк çухатусем кӳреççĕ.

(ТАСС).

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн Х-мĕш Çессийĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИСЕМ

I

Чăваш АССР халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планĕ çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн Л. С. СПАСАВ йулташăн докладĕ тата Чăваш АССР Госплан председателĕ заместителĕн М. А. АНДРЕЙЕВ йулташăн содокладĕ тăрăх йышăннă

1937 çул—иккĕмĕш пилĕкçуллăхăн йулашки çулĕ—ССР Союзĕнче социализма малалла çирĕплетсе тата ӳстерсе пырас ĕçри пысăк ӳсĕмсен çулталăкĕ пулса тăчĕ.

Стахановла йухăм сарăлса кайнипе иккĕмĕш пилĕкçуллăхăн планне ĕçе таткса паракан тĕп заданисем тăрăх срокчен малтан тултарнă.

„Иккĕ пилĕкçуллăхăн çулĕсенче чи малта тăракан техникăлă, калама çук ырă промышленнăç тунă", малта пыракан социализмлă йалхуçалăхĕ тунă, совет халăхĕн кулђтури улăпла ӳсрĕ, експлоататăрла классене пĕтерчĕ. „Социализм пурнăçа халăхăн куллелхи йалине кĕчĕ". **(Сталин).**

Чăваш республикинче те хуçалăхпа кулђтурă строителствин пур облаçĕсенче те пит пысăк ӳсĕмсем тунă. Чăваш республикĕ хамăр çĕршывра социализм тунă çĕре хутшăнса активлă ĕçлесе пырса, ПСК(б) Партин Тĕп Комитечĕ, Сталин йулташ тата ССРС Правителствин йертсе пынипе политикăпа хуçалăх тата кулђтурă тĕлĕшĕнче шалама çук ӳсрĕ.

1937 çул республикă промышленнăçĕ малалла ӳснĕ çулталăк пулса тăчĕ: республикă промышленнăçĕн продукци хисепĕ 11,8 проц.; райĕçтăвкомсен промышленнăçĕн—17,3 процент, кооперации промышленнăçĕн—9,2 процент ӳснĕ.

Ĕç тухăçлăхĕ те чылай ӳснĕ: Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх ĕç тухăçлăхне ӳстермели (пĕр рабочи пуçне продукци туса кăларасси) заданине 109,6 процент, Апат-çимĕç Халăх Комиссариачĕ тăрăх 115 процент, кооперации промышленнăçĕ тăрăх 112,3 процент тултарнă.

Йалхуçалăх йенĕпе республикă пĕрчĕлĕ тырăсем вăтам шутпа гектартан 15,6 центнĕр туса илнĕ. Колхозниксем вађђи чăнниех пуйан та кулђтурăлă пурнăç тунă. Рабочисен, хресченсен тата совет интеллигенцийĕн пурнăç условийĕсем нумай лайăхланчĕç: тавар саварнăшĕ 15,1 процент ӳснĕ, 16 çĕнĕ шкул туса ĕçе кĕртнĕ, ача сачĕсемпе йаслисен шучĕ чылай ӳснĕ, ача амăшĕсене сыхлас йенĕпе тумалли ĕçсене те сарнă.

Халăх тăшманĕсем—троцкиссем, сылтăммисем, буржуалă националиссем чăрмантарман пулсан, пирĕн хуçалăхпа кулђтурă строителствинчи ӳсĕмсем тата пысăкрах пулнă пулĕччĕç. Йапон-нимĕç фашисăмĕн çав агенчĕсем халăх хуçалăхĕн ӳсĕмне сахал мар сăтăр тунă. Анчах пирĕн болђшевикла парти рабочи клас, колхоз хресченĕсем тата совет интеллигенцийĕ активлăн пулăшнипе тăшмансене тупса палăртса çĕмĕрсе тăкрĕ, йертсе пырас ĕçсене çĕнĕ çынсене, хамăр партине пĕтĕм чĕререн парăннă çынсене, сăтăрçăсен сийенлĕ ĕçĕсен йулашкисене пĕтерме пултаракан, хуçалăхпа кулђтурăна малалла хăвăртрах ӳстерме пултаракан çынсене лартрĕ.

Çавăнпа пĕрлех Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ иртнĕ 1937 çулта Чăваш республикинче халăх хуçалăх планне тултарас тĕлĕшпе хăшпĕр отрасĕлсенче пысăк прорывсем пулнине палăртать.

1) ПСК(б) Парти Тĕп Комитечĕпе ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçула тата Çĕрпӳре, Именкассинче, Байгулăвăра колхозсен гидроелектростанцисене тăвасси çинчен йышăннине вăхăтра пурнăçа кĕртмен.

2) Промышленнăç строителстви хăйтĕллĕнех пуласса шаннă, çавна пула çĕнĕрен тумали строителства планĕ пурнăçа кĕмесĕр йулнă. Стройтрест тăрăх плана 80 процент çеç тултарнă, строителства планне йалсенче шкулсем тăвасине 82 процент, Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ тăрăх 76 процент тата промышленнăç строителстви йенĕпе çĕнĕрен строителства тăвасине 44 процент çеç тултарнă, çав вăхăтрах промышленнăç строителстви ĕçĕсен хакĕ йунелес вырăнне, 21,2 процент хăкланнă. Хăшпĕр предприйатисемсĕр („Болђшевик", Çĕмĕрле комбиначĕ, спирт савăчĕсем, çу савăчĕ, ата-пушмак хапрăкĕ) пуçне 1937 çулхи программăна тултарман.

3) Финанс ĕçĕнче пысăк прорыв пулса тăнă. Республикă бӳджетне тупăш напĕ йенĕпе 10 мĕлйун тенкĕ йахăн çирĕплетнинчен кайа тултарнă.

4) Йалхуçалăх продуктисене хатĕрлес тĕлĕшпе ситлĕксĕр ĕçленĕ: çулталăк пĕтнĕ тĕле МТС-сене натурплатă тӳлессине—87,5 процент, колхозсем кивçен илнине тавăрса парассине—82,6 процент, государствăна çĕрулми тăратассине—93,2 процент, аш-какай тăратассине—90,3 процент, сĕт парас плана—87,5 процент, çăм тăратас плана 94 процент çеç тултарнă.

Çапла вара, 1937 çулта чылай заданисем йенĕпе пирĕн республикă начар ĕçленĕ, çулталăка йапăх кăтартусемпе вĕçлерĕ.

Çавнашкал пулни вăл хуçайствĕнниксен, инженерсен, техниксен, йертсе пыракан тата ытти работниксен чылай пайĕ политикă йенĕпе нуçе курманран, лăпланса ларнăран, сăтăрçăсен сийенлĕ ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе питех те вăраххăн ĕçленĕрен, обывателле йăваш чунлă пулнăран килнĕ.

Вăл тата хуçалăх организацисен руководителĕсем нумайĕшĕ стахановла йухăма пуçарса пыманни, ăна массăлă йухăм тăвассишĕн ĕçлемени, хăйсен ĕçĕсене хуçалăхпа производствăлă актив çине тайанса туса пыманни çинчен те калать. Çавна пула вĕсем, тăшмансем диверсилĕсăтăрлă ĕçĕсене тунă çĕрте усă куракан ситменлĕхсемпе хĕсĕк вырăнсенче усса палăртас йенĕпе активран тивĕçлĕ пулăшу илеймен.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ хуçалăх ĕçĕнчи çав ситменлĕхсем çине кăтартса парса, хуçалăх работникĕсене пурне те вăл ситменлĕхсемпе татăклăн кĕрешме тата вĕсене хăвăртрах пĕтерме хушать. Кăтартнă ситменлĕхсене пĕтерни тата сăтăрçăсен сийенлĕ ĕçĕсен йулашкисене пĕтерни халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планне ăнăçлăн тултармалли условии пулса тăрать.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăратнă халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планне пĕтĕмпех ырласа çапла йышăнать:

Капитађнăй ĕçсен планĕ тăрăх

Пĕтĕм халăх хуçалăхĕн капитађнăй ĕçсен 1938 çулхи планĕн хисепне, йалхуçалăх кредичĕсене шута илмесĕр тĕп лимит тăрăх 73.049,7 пин тенкĕ пулмала тăвас, çав шутран:

Союз промышленнăçĕ тăрăх	35448,0	пин	тенкĕ
Республикă промышленнăçĕ тăрăх	4932,0	„	„
Транспăрт тăрăх, халăх хутшăнса ĕçленипе пĕрле	16711,7	„	„
МТС-сен строителстви тăрăх	1822,0	„	„
Çыхăну ĕçĕсем тăрăх	734,5	„	„
Суту-илӳ ĕçĕсем тăрăх	873,0	„	„
Коммуналлă хуçалăх тăрăх	3330,6	„	„

Вăрманпа усă курасси тăрăх

1. Хатĕрлев пысăкăшĕ çапла пулмала тăвас:

Пĕтĕм республикĕпе, Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕсĕр тата хăйсем тĕллĕн хатĕрлекен организацисемсĕр пуçне	1213,0	пин кубла метр;
Вăл шутран:		
а) Ĕçре йурăхлă йăвăççем	614,0	„ „ „
Çав хисепрен—		
Чăвашвăрманпром тăрăх	490,0	„ „ „
Вăрманпромсойуз тăрăх	100,0	„ „ „
Вырăнти вăрмансем тăрăх	24,0	„ „ „
б) Вутăлăх йăвăççем	599,0	„ „ „
Çав хисепрен—		
Чăвашвăрманпром тăрăх	430,0	„ „ „
Вăрманпромсойуз тăрăх	100,0	„ „ „
Вырăнти вăрмансем тăрăх	69,0	„ „ „

2. Республикре вăрман турттарас хисепе, Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕсĕр тата хăйсем тĕллĕн хатĕрлекен организацисемсĕр пуçне, çакăн чухлĕ çирĕплетес

	1229,0	„ „ „
Вăл шутран:		
а) Ĕçе йурăхлă йăвăççем	630,0	„ „ „
Çав хисепрен—		
Чăвашвăрманпром тăрăх	520,0	„ „ „
Вăрманпромсойуз тăрăх	100,0	„ „ „
Вырăнти вăрмансем тăрăх	16,0	„ „ „
б) Вутлăх йăвăççем	593,0	„ „ „
Çав хисепрен—		
Чăвашвăрманпром тăрăх	450,0	„ „ „
Вăрманпромсойуз тăрăх	100,0	„ „ „
Вырăнти вăрмансем тăрăх	43,0	„ „ „

3. Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ, вăрман организацисем питех те йапăх ĕçленине палăртса, республикри вăрман хатĕрлекен пур организацисене те хăйсен ĕçне вăрман хатĕрлев планне правителства панă срукра пурнăçа кĕртмелле çĕнетсе йеркелеме хушать.

4. Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ вăрман хатĕрлекен организацисене пурне те тата райĕçтăвкомсене механизацилене çулсемпе механизмсемпе туллин усă курмала тума тата вăрман хатĕрленĕ, турттарнă çĕрте ĕç тухăçлăхне татăклăн ӳстермеле тума хушать.

Йалхуçалăхĕ тăрăх

1. 1938 çулта тырăсем акмали çĕр лаптăкне 723, 3 пин гектар, вăл шутран кĕрхи тырăсене 227,0 пин гектар çине, çурхи тата нумай çул пыракан çулмали курăксене 496,3 пин гектар çине акмала тăвас, çав шутран:

а) Пĕрчĕлĕ тырăсем	524,1	пин	гектар;
Çав хисепрен			
Ыраш	202,8	„	„
Кĕрхи тулă	24,8	„	„
Çурхи тулă	60,4	„	„
Сĕлĕ	154,7	„	„
Пăрçалă тырăсем	46,1	„	„
(б Техникăла кулђтурăсем	11,7	„	„
е) Пахча-картиш кулђтурисем	59,1	„	„

г) Выђăх апачĕсен никĕсне малалла çирĕплетсе пырас шутпа 1938 çулта выђăхсене тăрантармали кулђтурăсене акмали çĕр лаптăкне 123,3 пин гектар тăвас, вăл шутран:

Тымар çимĕçсем	—4,2 пин гектар.
Пĕр çула пыракан курăксем	—43,0 пин гектар;
Нумай çулсене пыракан курăксем (çулмалисем)	—78,1 пин гектар.

2. Урăх тырпул çине акакан курăксем 57,0 пин гектар, вăл шутран 55,0 пин гектар клевĕр акмала тăвас.

3. Нумай çула пыракан курăксене вăрлăхлăх 13,2 пин гектар хăвармала тăвас.

4. 1938 çулта 5000 гектар çĕрем усма, вăл шутран çуркунехи тата çуллахи вăхăтра 1516 гектар çĕрем усма палăртас.

5. 1938 çулта çакăн пек агротехникăлă тĕп ĕçсене тума палăртас: тислĕк—3300 пин тоннă кăлармала, торф—1000 пин тоннă хатĕрлемелле, кĕркунне акнă тырăсене тата клевĕре 150 пин гектар синче сӳрелемелле, таса çĕртме—155 пин гектар тумала, çуртырфисене ретлĕн 210 пин гектар акмала, кĕрхи çĕртме—280 пин гектар тумала, колхозсен акмали пĕрчĕлĕ тырăсенчен суртлă вăрлăхсемпе—243,5 пин гектар акмала, çуркунне акмали пĕрчĕлĕ тырăсенчен суртлă вăрлăхсемпе колхозсен вăрлăх участкисем çине 37,8 пин гектар акмала, çĕрулми суртлă вăрлăхсемпе 18 пин гектар çине лартмала.

6. Колхозсенче çĕнĕрен 755 гектар çинче сатсем тума, вăл шутран 215 гектар çинче çырла сачĕсем тума палăртас.

7. 1938 çулта 5 МТС организацилес, вĕсенчен çураки тĕлне—3 МТС: Йетĕрне, Сĕнтĕрвăрри, Шăмăршă районĕсенче, тата кĕркунне тĕлне — Шăнкăртам, Çĕмĕрле районĕсенче.

8. 1938 çулта йалхуçалăхĕ вађђи пĕтĕмпе 8230 лаша вăйĕ чухлĕ 270 трактăр илсе килмелле, вăл шутран СТЗ трактăрсем—250, трактăр плугĕсем—481, комбайнсем — 200, пĕрчĕлĕ тырăсене акмали машинсем—300, сложнăй молотилкăсем — 50, груз турттармалли автомашинсем—40.

9. МТС-сенчи трактăрсемпе 814,2 пин гектар сухаламала тăвас, кашни 15 лаша вăйлĕ трактăрпа, авăн çапассипе пĕрле илсен 656 гектар, 15 футлă комбайнпа 252 гектар çинчи ĕçсене, пурнăçа кĕртмелле тăвас.

1938 çулта республикăра вăтам шутпа гектартан пĕрчĕлĕ тырăсем 100 пăт туса илессине пурнăçа кĕртмеле, выђăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе, сăт тата пахча-çимĕç хуçалăхне лайăхлатмала.

Ĕçтăвакан Тĕп Комитет çакна уйрăмах палăртать—çуракине ăнăçлăн ирттерни ума лартнă задачăсене пурнăçа кĕртме чи кирлĕ условисенчен пĕри пулса тăрать. Пур пĕрчĕлĕ тата пăрçалă кулђтурăсене те суртлă вăрлăхсемпе акни, пур тĕрлĕ агротехникăла ĕçсене те туса ирттерни кирлĕ. Совет организацисен Чăваш, Мордва тата Тутар республикĕсем тунă ăмăрту договăрне никĕсе хурса бригадăсем, колхозсем тата районсем хушшинчи социализмлă ăмăртăва пуçармала, вăл ăмăртăва пур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС работникĕсене йавăçтармала.

Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Халăх Комиссарĕсен Советне 1938 çулта пусуçаврăнăшĕнчи пăтранăва пĕтерме хушать. Республикăри пур колхозсенче те пусуçаврăнăшĕ çинчен йатăрласа сӳтсе йавмала. 1938 çулта свидетелствăсем парса çирĕплетме тĕрĕс пусуçаврăнăшсем тумала.

1938 çул суртлă вăрлăхсем тăвас ыйтăва тĕпрен татса паракан тата вăл тĕлĕшпе сăтăрçăсен сийенĕсене пĕтермелли çулталăк пулса тăмала. Кашни колхозăн уйрăм вăрлăх участкисем çинче хăйне валђди чи лайăх вăрлăхсем ӳстермеле, çапла вăрлăх тăвас ĕçе тĕрĕс организацилес пулать.

Пирĕн республикре выђăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç хуçалăхăн кайа йулнă участки пулса тăрать, хуçалăхăн çак отрасĕлне татăклăн çĕклеме пысăк ĕçсене пурнăçа кĕртмеле.

Ĕçтăвакан Тĕп Комитет пур колхозсенче те районсенче мĕнле йăхлă выђăх-чĕрлĕхсем усрас ыйтăва сӳтсе йавса хатĕрлеме, çав ĕçри пăтранăва пĕтермеле кирлĕ, тесе шутлать. Сыснасене тата сурăхсене пĕтĕмпех метизаци тумала, кăçал кĕсресене тата майракалă выђăхсене чуптарнă чух ăратлă аçа выђăхсемпе усă курса выђăх-чĕрлĕх пахалăхне пысăккăн лайăхлатмала.

Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Çĕрĕç Халăх Комиссариатне тата райĕçтăвкомсене ĕнесĕр колхозниксене ĕне усракан тăвассине пурнăçа кĕртмели пур ĕçсене те тума тата сталинла йалхуçалăх ертел уставне ĕçре пурнăçламала тума хушать. Кăçал выђăх-чĕрлĕх ĕрчетессине вăйлатма республикăн пысăк условисем пур. Пур колхозсенче те выђăх-чĕрлĕх ĕрчетессине вăйлатас ĕçсем çинчен халех уйрăммăн сӳтсе йавмала, уйрăммăн илсен çамрăк выђăхсене пĕтĕмпех пăхса ӳстермеле, выђăх-чĕрлĕхсене тĕрĕс ситтерсе тата пăхса усрамала тăвас пулать.

Уйрăм районсем хресчен хуçалăхĕсене коллективлас йенĕпе кайа йулса пынине палăртса, Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райĕçтăвкомсене тата йалсоветсене йединоличниксем хушшинче, вĕсене колхозсене йавăçтарас тĕлĕшпе массăлă-ăнлантару тата организацилле ĕçсене анлăн сарма хушать.

Транспăрт тата çыхăну тăрăх

1. Транспăрт вађђи 16711,7 пин тенкĕ укçа пама çирĕплетес, ăна çапла пайласа парас:

а) Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçулне тума	5500,0	пин	тенкĕ;
б) Шыв транспăртне	1574,0	„	„
в) Çулйĕр строителствине	10107,3	„	„
Вăл шутра халăх хутшăнса ĕçлесси	8907,9	„	„
г) Автогужтреста	130,0	„	„

2. Канашпа Шупашкар хушшинчи Чукунçул строителстви управленине лини хывса пĕтерсе çулталăк варринче рабочи пойăссен çӳремеле тума хушас.

3. 1938 çулта автомобилсем тата лашасемпе çӳремели государствă çулĕсем тăрăх Уђйанавск тракчĕ çинче Шупашкар—Çĕрпӳ хушшинче 12 километр чул сарма палăртас.

Вырăнти çулсем тăрăх

а) Йакатса тухнă çулсем	30	километр;
б) Грави сарнă çулсем	20	„
в) Чул сарнă çулсем тата шоççе	32	„
г) Торцовкă сарнă çулсем	24	„
д) Çĕр купаласа йакатса тунă çулсем	244	„

Кĕперсемпе трупасем 2050 метр тăршшĕ тума палăртас.

4. Çулйĕр строителствинче туса пĕтернĕ ĕçсене правителствă Комиççийĕ йышăнмалли срук 1938 çулхи октăбĕрĕн 1-мĕшĕ пулмала тăвас.

5. Автопарк пит йапăххине тата пачах та ситлĕксĕр ĕçленине палăртса Халăх Комиссарĕсен Советне автохуçалăха лайăхлатмали ĕçсене хатĕрлеме хушас.

6. Çыхăну ĕçĕсене тума вырăнти бӳджетран 524,0 пин тенкĕ памала тăвас.

7. 1938 çулта Хĕрлĕ Чутайра, Пăрачкавра, Кувакçăра, Шăнкăртамра(ку Патăрьелĕ те точкăсем парать), Вăрнарта радиоузĕлсем туса тата Кӳкеçри, Пелчĕкри узĕлсене пысăклатса çĕнĕрен 3500 радиоточкă хушма палăртас.

8. Пур йалсоветсене те телефон кĕртмеле тата малтан тунă линисене лайăхлатмала тăвас.

9. Çĕнĕрен телефон линисем 238 километр тăршшĕ, çĕнĕ проводсем 792 километр тăршшĕ, иккĕмĕш проводсем 210 километр тăршшĕ карма палăртас.

Коммуналлă хуçалăх тăрăх

Коммуналлă електростанцисем йенĕпе електроенерги туса кăлармалли план 5960,8 пин киловат сехет палăртас, вăл шутран Шупашкарти електростанци 4 мĕлйун киловат-сехет енерги памала. Коммуналлă електростанцисен йенĕпе ĕçрен усăлă електроенерги 5298,5 пин киловат-сехет кăлармала тăвас.

Шупашкарти тата Улатăрти водопроводсем 670 пин кубла метр йурăхлă шыв памала тăвас.

Суту-илӳ тăрăх

1. Вакккăн таварсем сутмалли хисепе 1937 çулхинчен 14 процент ытларах 321 мĕлйун тенкĕлĕх тăвас, вăл шутран хуласем тăрăх 137,7 мĕлйун тенкĕлĕх, ку иртнĕ çулхинчен 11,2 процент ытларах пулать, йалсем тăрăх 183,3 мĕлйун тенкĕлĕх, урăхла каласан, иртнĕ çулхинчен 16,2 процент ытларах сутмала тăвас.

Пĕрлешӳлĕ апатлану предприйатисен суту-илӳ хисепне 29,7 мĕлйун тенкĕ ситерме палăртас.

3. Совет суту-илӳвĕ халăх хуçалăхĕн ытти отрасĕлĕсенчен йулса пынине палăртса, Ĕçтăвакан Тĕп Комитет суту-илӳ организацисене сутă тăвас ĕçе тата хатĕрлев ĕçĕсене татăклăнах лайăхлатма, тавар илекенсемшĕн кулђтурăлă ĕçлессине çĕклеме, тавар илекенсене улталанисемпе тата вĕсемпе вашавак пулманнипе пĕр хĕрхенӳсĕр кĕрешме хушать.

4. Таварсем тăратакан тата суту-илӳ тăвакан организацисен базисен ĕçне йеркелемелле, базăсенчен таварсене механически валеçес практикăна пĕтермеле, кашни магазинра кирлĕ таварсем йалан ситлĕклĕ пулмала тăвас пулать тата тавар пахалăхĕшĕн кĕрешмеле; вырăнта тунă (промкооперации, Вырăнти тата Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕсем) таварсемпе; çавнашкалах йалхуçалăх продуктисемпе туллин сутуилӳ тумала.

Суту-илӳ тăвакан системăра пурлăха саратнине, растратăсене, çухатусене хирĕç пĕр хĕрхенӳсĕр кĕрешмеле, суту-илӳ кадрĕсем хушшинчен халăх тăшманĕсене, жуликсене, вăрăсене тата ирттен-çӳрейсене пурне те хăваласа кăлармала. Растратăсене пыраса илменнине пĕртте хăвармала мар.

Ĕçтăвакан Тĕп Комитет райĕçтăвкомсене тата хула совечĕсене суту-илӳ ыйтăвĕсемпе куллен ĕçлесе пырса, суту-илӳ тăвакан магазин йе ларйок квартал, уйăх планне тултармала тума, суту-илӳ организацисене йалăнах пулăшса пыма тата вĕсен ĕçĕсене пĕрмайах тĕрĕслесе тăма хушать.

Халăха вĕрентесси тăрăх

1. Вĕренекенсен хисепĕ çакăн чухлĕ пулмала çирĕплетес:

1—4 мĕш классенче	118,5	пин çын;
5—7-мĕш классенче	64,2	пин çын;
8—10-мĕш классенче	10,5	пин çын.

2. Шкулсене çакăн чухлĕ вĕренме илмеле тăвас:

1-мĕш класа	32,4	пин çын;
5-мĕш класа	23,0	пин çын;
8-мĕш класа	4,5	пин çын.

Вĕрентсе кăлармала:

4-мĕш классенчен	24,0	пин çын;
7-мĕш классенчен	16,0	пин çын;
10-мĕш классенчен	1,0	пин çын.

3. Шкулта вĕренме çул ситмен ачасен çурчĕсене 51,5 пин çынна йавăçтармала, вăл шутран йаланах ĕçлекен çуртсене—8,5 пин çын, сезонлă ĕçлекен çуртсене 43,0 пин çын йавăçтарма палăртас.

Вырăнти бӳджет шучĕпе 2105 ачана пăхса усрама илес.

4. Педагогикă кадрĕсем хатĕрлес хисепе çапла çирĕплетес:

а) Пединститутра вĕренекенсен хисепĕ

1938 çул вĕçĕнче	540	çын;
Вĕренме илмеле	240	çын;
Вĕрентсе кăлармала	64	çын.

б) Учителсен институтĕнче вĕренекенсен хисепĕ — 550 çын; Вĕренме илмеле — 360 çын; Вĕрентсе кăлармала — 142 çын;

в) Педучилищăсенче вĕренекенсен хисепĕ — 3265 çын; Вĕренме илмеле — 1080 çын; Вĕрентсе кăлармала — 770 çын;

5. Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Çутĕç Халăх Комиссариатне çаксене пурнăçа кĕртме хушать:

а) 1938—1939 вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче шкула кайма çул ситнĕ ачасене пурне те вĕренме илмеле, туллимар вăтам тата вăтам шкулсенчи 5-пе 8-мĕш классене кирлĕ чухлĕ вĕренекенсем илмеле;

б) шкулсене программă тăрăх кирлĕ чухлĕ оборудованисем тата вĕренӳ пособийĕсем тӳйанса памала;

в) шкулсенче вĕренӳ пахалăхне тата вырăс чĕлхине вĕрентессине татăклăнах лайăхлатмала.

6. Иртнĕ çулта туса пĕтермен шкулсене 1938 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне, çĕнĕрен тумалли шкулсене вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле туса пĕтермеле тума шкулсем лартас ĕçе оперативлă йертсе пымала.

Искусства ĕçĕ

1. Художествăлă шкулсене 120 çын вĕренме илмеле, вăл шкулсенчен 29 çын вĕрентсе кăлармала тăвас. 1938 çул пĕтнĕ тĕле вĕренекенсен хисепĕ 485 çын, вăл шутра музăк, театр тата гравйурă училищисенче вĕренекенсен хисепĕ 375 çын пулмала тăвас.

2. Искусствă ĕçĕсен управленине искусствă ĕçĕсене татăклăн лайăхлатса пама, художествăлă коллективсене массăсем патне çывхартма, талантсене тупса палăртас, халăх творчествине тата та вăйлатас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеме хушас.

Кино

1. Киноустановкăсем 123, вăл шутран йалан ĕçлекеннисем 14, вăхăтлăха ĕçлекеннисем 13, куçса çӳрекен сасăлă киноустановкăсем 13, автомобил çине вырнаçтарнă куçса çӳрекен сасăлă киносем 5, куçса çӳрекен сассăр киносем 78 пулмала тăвас.

2. Чăвашкинотреста 1938 çулта пур районсен центрĕсенче те сасăлă киносем лартма тата Çĕмĕрлере калаçакан кино тума хушас.

Сывлăха сыхлав ĕçĕсем тăрăх

1. Республикăри пуђницăсенчи койкăсен хисепне 2222 койкăна ситермеле, вăл шутран: хуласенче—1195, йалсенче—1027. Пĕтĕм койкăсен хисепĕнчен пуђницăсенче ача çуратмали тата бӳджет шучĕпе тытса тăракан ача çуратмали çуртсенчи койкăсен шутне 400 ситермеле, вăл шутран: хуласенче—170, йалсенче—230.

2. Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариатне медицинă йенĕпе пулăшу парассине лайăхлатма, трахом чирĕпе кĕрешес ĕçе вăйлатма тата 1938 çулта трахома пĕтерме тумалли ĕçсен конкретлă планне Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Советне тăратма хушас.

3. Вырăнти бӳджет шучĕпе тытса тăракан йалан ĕçлекен йаслĕсем 35, вĕсенче 1468 ача пулмала тăвас. Вăхăтлăха ĕçлекен йаслĕсенче, 36,0 пин ача пулмала тăвас.

4. Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариатне, хула совечĕсене тата райĕçтăвкомсене 1938 çулта куç чирĕсенчен сыватакан Шупашкарти пуђницăна, фелдшĕрсемпе акушеркăсем хатĕрлекен Канашри шкула, Çĕмĕрлере 80 ача вађђи, Сĕнтĕрвăрринче 36 ача вађђи, Улатăрта 80 ача вађђи йаслĕсем тума тата Кӳкеçре 15 койкă вырнаçмалăх, Çĕмĕрлере 15 койкă вырнаçмалăх, Шупашкарта 25 койкă вырнаçмалăх ача çуратмали çуртсене туса пĕтерме хушас. Мађаринчен (сив чиртен) сыватакан Шупашкарти станцине аслăлатса пысăклатас ĕçе тата Чурачăкри пођницăра хуçалăхпа службă çурчĕсене тăвас ĕçсене пурнăçа кĕртмеле.

Иккĕмĕш квартал пĕтиччен Çĕрпӳри, Шăнкăртамри, Патăрйелĕнчи, Йелчĕкри ача йаслисене, Çĕмĕрлери ача çуратмали çурта туса пĕтерсе ĕçе кĕртмеле тăвас пулать.

(Йулашки 3-мĕш страницăра).

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн Х-мĕш Çеççийĕ йышăннă постановленисем

Чăваш АССР халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планĕ çинчен

ЙУЛАШКИ

Социалл. ă пулăшу ĕçĕсем тăрăх

1938 çула валçи çирĕплетес:
а) Пенсионерсен шучĕ пĕтĕмпе — 7488 çын;
б) Ĕçлеме вырнаçтармала — 695 çын;
в) Вĕрентмеле — 100 çын;
г) Инвалидсен çурчĕсене илмеле — 195 çын;
д) Тăлăх ачасене усрама памала — 764 çын.

Хапрăксемпе саватсенче тата колхозсенче оборонă ĕçне вăйлатма Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Халăх Комиссарĕсен Совет-не оборонă ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе, тĕл перекенсем хатĕрлес, химилĕ тапăнурăн сыхланма хатĕрленес тĕлĕшпе вырăнсене конкретлă кăтартусем пама, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ оборонă ĕçĕ тĕлĕшпе панă директива пурнăçа кĕртме хушать.

Ĕçтăвакан Тĕп Комитет çапла шутлать: иртнĕ çулта хăшпĕр допризывниксем призыв пунктне хут пĕлменнипех пыни питех те килĕшÿсĕр. Кăçал призывниксем хушшинче хут пĕлменлĕхе пĕтĕмпех пĕтермеле.

Халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планĕ хамăр республикăн халăх хуçалăхĕн пур отраçлисене те тата культура строительствине аллăн сарса пыма май парать; пăнă йăнăçлăн пурнăçа кĕртни рабочисемпе хресченсен тата совет интеллигенцин пурнăç условисене малалла лайăхлатма майсем туса парать.

Çак пысăк программăна пурнăçа кĕртме халăх комиссариачĕсен, хуçалăх оргăнĕсен хăйсен ĕçĕсене татăклăн сĕнетсе урăхлатмала, вĕсен хăйсен предприятисен, стройкисен, учрежденисен ĕçĕсене оперативлă туса пымала. Ĕçе хуçалăхăн кашни отраçли, кашни савăт тата колхоз государствă планне çулталăк пуçламăшĕнчен тытăнса кунран-кун, уйăхран-уйăха, кварталтан кварталла тултарса пымала туса организацилемелле.

Плана тултармалли тĕп условисенче вăл стахановла йухăмпа социалисăмла ăмăртăва малала вăйлатса пыраççи пулать, çавăнпа хуçалăх организацисен руководителĕсен стахановла йухăма çирĕп, большевикла йĕртсе пымала, стахановла йухăма ÿсме чăрмантаракан ситменлĕхсене сирсе пырса, стахановецсене конкретлă пулăшу памала.

Ĕçтăвакан Тĕп Комитет халăх комиссариачĕсен, хуçалăх организацисен тата предприятисен руководителĕсене сăтăрçăсен сиенлĕ ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене кăшт та вăраха хăвармасăр пурнăçа кĕртсе пыма, пĕтĕм ĕçе тăшман производствăна хĕсĕнсе кĕрессине пĕтерес май организацилеме хушать.

Хуçалăх организаци руководителĕсен уйрăмах хăйсен кадрĕсене чăн-чăн большевикла воспитани парасси, работниксем суйласа илессĕ çине хытă сăнăрса пăхмала, ĕçлеме пултараймасăр, шанчăксăр работниксене хăваласа кăлармала, кĕçĕн ĕçсенче ÿснĕ çамрăк кадрсене йĕртсе пырас ĕçе хăйулăн куçармала, вĕсене валçи хăйсене хушнă участка ĕçне алла çавăрса илме условисем туса памала.

Ĕçтăвакан Тĕп Комитет пĕтĕм ĕççынисене çак решенипе çирĕплетнĕ халăх хуçалăх планне пĕтĕмпех тултарассишĕн пĕр харăссăн, тимлĕн тата организациллĕн кĕрешме чĕнет. Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Чăваш республикĕнчи ĕççынисем, революцилĕ сыхăлăха тата та çÿле хăпартса, халăх тăшманĕсене йĕрне хăвармиччен тупса палăртса çĕмĕрсе тăкса, сăтăрçăсен сиенлĕ ĕçĕсене пĕтерсе, большевикла парти, унăн Тĕпкомĕ тата халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ йĕртсе пынипе халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планне тивĕçлĕн тултарасси çине çирĕп шанать.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕн заместителĕ **С. КОРОТКОВ.**

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн секретарĕ **Т. ВАСИЛЙЕВ.**

Шупашкар хули, 1938 çулти апрелĕн 6-мĕшĕ.

II

Чăваш АССР 1937 çулти бÿджетне ĕçе кĕртни тата 1938 çулти бÿджет çинчен

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн И. З. ЗАХАРĂВ йулташăн доклачĕ тата Бÿджет Комиççи председателĕн П. Д. КРАСНОВ йулташăн содоклачĕ тăрăх йышăнна

Чăваш АССР-ĕн 1937 çулхи бÿджетне ĕçе кĕртни тата 1938 çулхи бÿджечĕ çинчен Финанс Халăх Комиссарĕ И. З. Захарăв йулташ докладне тата Бÿджет Комиççи председателĕ П. Д. Красиов йулташ содокладне итленĕ хыççăн, Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ çапла йышăнать:

I. 1937 çулхи бÿджета ĕçе кĕртни çинчен

1. Республикăн, районсен тата хуласен 1937 çулти вырăнти бÿджечĕсене доход йенĕпе 115.368,0 пин тенкĕ, расхутсем йенĕпе 112.671,5 пин тенкĕ ĕçе кĕртнĕ отчота çирĕплетес.

2. Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ республикăн бÿджетне ĕçе кĕртнĕ чухне пулнă çак пысăк ситменлĕхсене палăртать:

а) хуçалăхăн уйрăм отраçлисем тăрăх (вăрман, районти промышлĕннăç, государствă налогĕсем тата сборĕсем) иртерсĕ — пурĕ 2065,3 пин тенкĕ тултарнă пулсан, республикăн бÿджетне доход йенĕпе 5446,9 пин тенкĕ тултарман. Вырăнти хуçалăхсен доходне промышлĕннăç—461,8 пин тенкĕ, коммуналлă пурăнмали çурт-йĕр хуçалăхĕ—183,6 пин тенкĕ, суту-илу организацисен тавар çаврăнăшĕнчен илекен налога (Заготзерно, Чăвашторг, Хлопкосбыт, Аш-какай тресчĕ) 5972,4 пин тенкĕ тултарман, халăх укçа-тенкине мобилизацилес плана, уйрăмах ирĕклĕ тÿлевсем тăрăх тултарман. Ку вăл чылай хуçалăх, уйрăмах суту-илу организацийĕсенче дисциплинă, государствă интересĕсемшĕн, халăх интересĕсемшĕн тăрăшни пулманнинчен килнĕ. Суту-илу тата кооперации организацийĕсенче пысăк растратăсем, çаратса пĕтернисем, ситменнисем пулнă. Хуçалăх оргăнĕсен руководителĕсем финанс обйазательствине тултарассишĕн государствă умĕнче ответлăх туйман, тирпейлĕх режимĕн никĕсне хака хуман, çакăнпа халăх тăшманĕсем хуçалăха пăтрантарма усă курнă;

б) доходсене тултарса ситереймен пирки социаллă-культурлă кирлĕ ĕççене 6626 пин тенкĕ укçа параймăн, çак шутра халăха вĕрентес ĕçе 2658,8 пин тенкĕ памасăр йулнă, çавăн пекех кирлĕ ĕççене, шкул çулне ситмен ачасен учрежденийĕсене 170,0 пин тенкĕ, вулав çурчĕсене 322,0 пин тенкĕ, шкулсене валçи кĕнекесем илме — 410,0 пин тенкĕ укçа-тенкĕ параймăн, çав вăхăтрах Сутĕç Халăх Комиссариачĕн системи тăрăх командировкăсене çÿреме 91,0 пин тенкĕ ытлашши расхутланă.

Сывлăха сыхлас йенĕпе тумали тĕп ĕççене валçи чылай укçа парса ситереймен. Бÿджетăн расхут пайне 19831,9 пин тенкĕ вырăнне, 18341,4 пин тенкĕ тултарнă, 1490,5 пин тенкĕ тултарайман, управлени тăрăх 13,8 процент ытлашши расхутланă. Сывлăха сыхлав оргăнĕсем, ĕçтăвакан комитетсемпе советсем вырăнта сыватакан учрежденисене сарас тĕлĕшпе вăхăтра тивĕçлĕ ĕçсем тăвайман, çавна пула трахомран сыватакан пунктсене панă укçана 85,2 процент çеç, йаленче ача суратмали çуртсем тума панине 77,4 процент, акушеркă пункчĕсем валçи панипе 70,7 процент, ача йаслисем валçи панипе 70,9 процент çеç усă курнă.

Ку вăл ĕççыннисемшĕн чи кирлĕ ĕççене пурнăçа йăлтах кĕртсе ситерейменнине кăтартать, куншăн ĕçтăвакан комитетсем, советсем, Сутĕç Халăх Комиссариачĕн, Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн руководителĕсем тата вĕсен вырăнти оргăнĕсем ответлă;

в) çак районсем бÿджета доходсем тăрăх пит сителĕксĕр тултарнă: Тăвай (77,7 процент), Шăмăршă (81,8 процент), Хĕрлĕ Чутай (81,6 процент), Шăхасан (82 процент), Йĕпреç (84,9 процент). Çавна пула вĕсем районти социаллă-культурлă пысăк ĕççене укçа парса ситермен;

г) бÿджет укçи-тенкипе, çавăн пекех тата хуçалăх организацийĕсен укçи-тенкипе усă курнă чухне нимĕнле контроль те пулман, ведăмствăри контроль чăннипе ĕçре пулман, çакă - вăл тăшманла ĕтемсене государствă укçи-тенкине айăпланмасăр йулса çаратса пĕтерме май панă;

д) финанс оргăнĕсемпе райĕçтăвкомсем сителĕксĕр йĕртсе пынă пирки йал бÿджечĕсене, вĕсем ĕççыннисен сарлака массисен кулленхи нушисене сырлахтарма тивĕçлĕ, — сителĕксĕр тултарнă (82,8 процент);

е) бÿджета тултарнă чухне çавăн пекех тата тĕпрен тумали ĕçе укçа-тенкĕ хывассине тултарманни те, тумали ĕççене вăрăма тăсса укçа-тенкĕне оборотран кăларни те пысăк ситменлĕх пулса тăрать. Нумай ведăмствăсем, уйрăмах, Сутĕç Халăх Комиссариачĕ, Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ, Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссариачĕ, Суту-илу Халăх Комиссариачĕ тăрăх тума тытăннă çурт-йĕрсем нумайĕшĕ туса пĕтермесĕр йулнă.

II. 1938 çулти бÿджет çинчен

3. Чăваш АССР-ĕн 1938 çулти бÿджетне доход тăрăх 129.819,9 пин тенкĕ, расхутсем тăрăх 129.819,9 пин тенкĕ, вăл шутра республикă бÿджетне доход тата расхут тăрăх 47967,9 пин тенкĕ, çакăн пек пайласа çирĕплетес:

ДОХОДСЕМ	СУММĂ (пин тенкĕпе)
Промышлĕннăç	2549,0
Йалхуçалăхĕ	91,0
Вăрман хуçалăхĕ	5783,0
Коммуналлă пурăнмали çурт-йĕр хуçалăхĕ	1430,8
Суту-илу	326,0
Вырăнти налогсем	1324,2
Налог мар тĕрлĕрен доходсем	850,0
Государствă налогĕсенчен тата налог мар доходсенчен илсе йулни	103.137,9
Государствă налогĕсем, тÿрех вырăнти бÿджета кĕрекен сборсемпе пошлинăсем	9047,0
Хуçалăх оргăнĕсем паракан укçа тенкĕ	1800,0
Бÿджет укçи-тенкин йулашкисем	3481,0
ПĔТĔМПЕ	129.819,9

РАСХУТСЕМ	СУММĂ (пин тенкĕпе)
Промышлĕннăç	5149,0
Йалхуçалăхĕ	4290,0
Коммуналлă пурăнмали çуртйĕр хуçалăхĕ	5335,9
Вăрман хуçалăхĕ	647,0
Суту-илу	557,1
Халăха вĕрентес ĕç	68133,5
Сывлăха сыхлав	21663,0
Физкультура	200,0
Социаллă пулăшу	5331,0
Транспăрт	1534,0
Ытти расхутсем	355,0
Управлени	14401,0
Займсем тăрăх тÿлени	53,4
Госстрахран 15 проц. тытса йулнă шутпа пулакан расхутсем	1550,0
ПĔТĔМПЕ	129.819,9

4. Ĕçтăвакан Тĕп Комитет ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Советне финанспа бÿджет дисциплинине пăснине хирĕç татăклăн кĕрешме хушать. Финанс Халăх Комиссариачĕн тата пĕтĕм финанс системин, йалти ревизи комиççисен 1938 çул хушшинче пĕтĕм бÿджетлă учрежденисене ревизи туса тухмала, халăх комиссариачĕсемпе ведăмствăсен руководителĕсен ревизорсене штат чухлĕ пухса ситермелле, ведăмствăсен контроль ĕçне татăклăн лайăхлатмала.

Райĕçтăвкомсен президиумĕсене апрелĕн 25-мĕшĕнчен кайа йулмасăр йал бÿджечĕсене 1938 çулти пĕррĕмĕш кварталта ĕçе кĕртни çинчен итлеме, йал бÿджечĕсене тăтăшах тултарса пыма тивĕçлĕ ĕçсем тума хушас.

5. Районти ĕçтăвакан комитетсене, йал тата хула совечĕсене социаллă-культурлă учрежденисене (шкулсене, пульницăсене, библиотекăсене, вулав çурчĕсене, ача-пăча учрежденийĕсене), йал хуçалăхĕ йенĕпе тумали ĕçсем валçи (агроучасткăсен, ветеринари врачĕсен, ветеринари фельдшĕрĕсен, зоотехниксен участкисен) пурне те сителĕклĕ укçа-тенкĕ парса тăма управлени ĕçне валçи укçа-тенкĕ ытлашши расхутлассине хирĕç хытă кĕрешме хушас.

6. Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Халăх Комиссарĕсен Советне, районти ĕçтăвакан комитетсене, хула, йал совечĕсене, финанс оргăнĕсене, çавăн пекех хуçалăх тата суту-илу организацийĕсене кашни районăн, кашни хулан, йал совечĕн 1938 çулти бÿджет тăрăх йышăннă пур доходсене пĕтĕм тÿлевсем тăрăх тултарма хушать. Государствă, хуçалăх, суту-илупе кооперации организацийĕсен пысăк задачи—социалисăм строительствине малала çирĕплетсе ÿстерсе пыма тата ĕççыннисен культурлă йăлине лайăхлатма пур резервсене те туллин тупма тата укçа-тенкĕне тирпейлĕ расхутлама массăна мобилизацилесси пулать.

7. Хуçалăх организацийĕсем нумайĕшĕ бÿджет тĕлĕшпе хăйсен обйазательствисене пурнăçа кĕртме пăрахнине тÿсме çук тесе шутлаçа. Ĕçтăвакан Тĕп Комитет хуçалăхлă Халăх Комиссариачĕсене тата ведăмствăсене хăйсене пăхăнса тăракан предприйатисемпе учрежденисене 1938 çулта бÿджета тивĕçлĕ укçана пĕтĕмпех тата вăхăтра бÿджета хывтарма, финанс оргăнĕсене хăйсен çаккун тăрăх панă прависене вăхăтра тÿлемен организацисем тĕлĕшпе çирĕп пурнăçа кĕртме хушать.

8. Укçа-тенкĕ кирлĕ мар çĕре йанипе çаратса пĕтернине учотпа отчот ĕçне начар йĕркелени тата арпаштарни пулăшнине шута илсе, пур организацисемпе учрежденисен руководителĕсене финанс хуçалăхне тата учотна отчот ĕçне татăклăн лайăхлатма, финанс оргăнĕсене учотпа отчот ĕçне мĕнле йĕркеленине, финанспа бÿджет дисциплинине тытса пынине çирĕп контроль тума, предприйатисен, учрежденисен финанс баланçне тата финанспа хуçалăх ĕçĕ мĕнле тăнине совет активĕн, рабочисемпе колхозниксен пухăвĕсенче сÿтсе-йавма вăхăтран вăхăтрах лартма хушас.

9. 1938 çулти бÿджета тултармалли татăклă условисенчен пĕри кадрсене пĕлсе ĕçе илни; вĕсене большевикла воспитани пани, çавăн пекех государствă, хуçалăх, кооперации, обществăлă организацисен руководителĕсем финанс техникине алла илни пулнине йышăнса, Ĕçтăвакан Тĕп Комитет руководителĕсене финанс дисциплинине пăсаканçене хирĕç татăклăн кĕрешме, финанс ĕçĕн техникине алла илме аппарата — финанс хуçалăхне пăçса пĕтерме социалисăмла пурлăх çине тапăнма хăтланакан, сăтăрçăсенчен, жуликсенчен, иртен-çÿренсенчен тасатса, кадрсене большевикла воспитани пама хушать.

Ĕçтăвакан Тĕп Комитет постановленине пурнăçа кĕртменнине государствă укçи-тенкине растратă тăваканçене, çаратса пĕтерекенсене хирĕç судпа следстви оргăнĕсем сителĕклĕ кĕрешни çуккине палăртса, судпа следстви оргăнĕсене государствă укçи-тенкине кирек-мĕнле майна çаратса, усăсăр расхутлама хăтланнине хирĕç татăклăн кĕрешме хушас.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕн заместителĕ **С. КОРОТКОВ.**

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ **Т. ВАСИЛЙЕВ.**

Шупашкар хули, 1938 çулти апрелĕн 6-мĕшĕ.

III

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн VII-мĕш Çеççийĕ 1937 çулти октябĕрĕн 18-мĕшĕнче Т. П. Хрисанфăв йулташа Ĕçтăвакан Тĕп Комитет членĕсен составĕнчен кăларма йышăннă постановленийе пăрахăçа кăларасси çинчен

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн VII-мĕш Çеççийĕ 1937 çулти октябĕрĕн 18-мĕшĕнче Тихăн Павлăвич Хрисанфăв йулташа Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет членĕсен составĕнчен кăларма йышăннă постановленийе, вăл тĕрĕс мар пирки, пăрахăçа кăларас.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕн заместителĕ **С. КОРОТКОВ.**

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ **Т. ВАСИЛЙЕВ.**

Шупашкар хули, 1938 çулти апрелĕн 6-мĕшĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

20 минутлă отчот

Шупашкарти пушара хирĕç кĕрешекен командă çумĕнчи парторганизаци отчотпа суйлав пухуне пĕртте хатĕрленмен. Çавăнпа суйлав пухăвĕ активлă иртмерĕ. Мицынă парторг хăйĕн отчотĕнче хуçалăх ĕçĕсем çинчен çеç чарăнса тăчĕ. Парторганизацинчĕ партилĕ-политикăлă ĕçе мĕнле йĕркеленине отчотран курма çук. Мицына йулташăн доклачĕ висĕ ыйтуран тăрать. Пĕррĕмĕшĕ—пушара хирĕç кĕрешекен командăн ĕçĕпе йăла условийĕ, иккĕмĕшĕ—профсойуз тата обчăлă организацисемпе йĕртсе пырасси, висçĕмĕшĕ—стена хаçачĕ мĕнле ĕçлени çинчен. Çак ыйтусем тăрăх 20 минутлă отчот тунă хыççăн, прени пуçланчĕ. Пренире тухса калакан коммуниссем те, докладчик пекех, хуçалăх ĕçĕсем çинчен чарăнса тăчĕç. Йулашкинчен „парторганизаци сителĕклĕ ĕçлене" тесе постановлени йышăнчĕç. Парти организатăрне Мицынă йулташах вăрттăн сасăласа суйлана хыççăн, пуху хупăннă.

Парторганизаци ĕçе чăнах сителĕклĕ-ши? Çук. Парторганизаци ĕçе сителĕксерри çинчен çакăн пек фактсем калаççĕ. Парторганизаци 3 çынтан тăрать. Вĕсенчен иккĕшĕ ниçта та вĕренмеççĕ. Парти организатăрĕ коммуниссене поручениссем парса, парти ĕçне йавăçтарман.

Пушарпа кĕрешекен командăра 105 çын. Вĕсем хушшинче политикăла агитаци ĕçне йĕркелемен. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕренес ĕçе йĕркелемен.

Коммуниссем те вĕренмеççĕ, ытти бойецсене те вĕрентме тăрашмаççĕ. Организацире хутла сахал пĕлекенсем нумай. Вĕсене вĕрентес ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Дисциплина сахал.

Партире тăман активпа ĕçлемен пиркипех парти организаци ÿсмест. 1937—38 çулсенче пĕр çынна та парти ретне те, сочувствуйущисен ретне те илмен.

Докладчик те, пренире тухса калакан коммуниссем те парти Тĕпкомĕн йанвар уйăхĕнчи Пленумĕн решенисене мĕнле пурнăçлани çинчен пĕр сăмах та асăнмарĕç. „Епĕр коммуниссене партирен кăларман, парти Тĕпком Пленумĕн решенийĕ пире тивмест" тесе сÿпĕлтетеççĕ. Анчах фактсем (Бокшандайĕв) урăхла кăтартса параççĕ.

Çакăн пек ситменлĕхсене курах пуçламĕш организаци ĕçне сителĕклĕ теме пулать-ши ĕнтĕ?

Шупашкарти хула комитечĕ те парти организацине ĕçре пулăшса пыман. Кул пирки Коршунов коммунис акă мĕн калать: „1937—38 çулсенче пирĕн патра хула комитечĕн инструкторĕ Соколовă йулташ пĕр хут çеç пулнă. Анчах вăл пирĕн ĕçпе паллашман. Мăнăн халĕ вăхăт çук, тепĕр чух килĕп, тесе кабинетра 10 минут хушши пулнă хыççăн, тухса кайнă. Вăл вăхăтранпа хула комитетĕнчен пирĕн пата никам та килсе курман".

П. Перлов.

Парторгăнсен суйлавĕсене лайăх йертсе пымала

КИЙĔВ, апрелĕн 16-мĕшĕ (ТАСС). Украинăри К(б)П Тĕпкомĕ Украинăри хăшпĕр пуçламĕш организацисенче отчотпа суйлав пухăвĕсене хатĕрленес тата ирттерес ĕçре малтанхи кунсенче пулнă пысăк ситменлĕхсене палăртса постановлени йышăннă.

Чылай предприйатисенче ПСК(б)П Тĕпкомĕ парторгăнсен суйлавне ирттересси çинчен йышăннă постановленипе инструкцине сийелтен сÿтсе-йавнă. Хăшпĕр парторганизацисенче суйлава йапăх хатĕрленнĕ пирки отчотпа суйлав пухăвĕсене коммуниссем начар пухăнаççĕ.

Тирасполь хула комитечĕ, Котовск, Дубосарск, Григориопольск тата Слободзейск парти райкомĕсем (Молдави АССР) пуçламĕш парторганизацисен руководителĕсене отчотсем хатĕрлес ĕçре пулăшас вырăнне, „тĕслĕхлĕ схемăсем" йарса панă. Кийĕв хула комитечĕ „Украинăри вăрман тресчĕ" çумĕнчи парткомăн суйлавне ним сăлтавсăрах пăрахăçа кăларнă.

Облаçри тата районри хаçатсем партин йĕртсе пыракан оргăнĕсен суйлавĕсен ыйтăвĕсене сителĕклĕ çутатса пымаççĕ.

Украинăри К(б)П Тĕпкомĕ обкомсене, хула комитечĕсене, райкомсене пуçламĕш организацисен руководителĕсене отчотсем хатĕрлес ĕçре, нуринчен ытла парти ĕçне нумай пулмасăр, партнă йулташсене пулăшма хушнă.

Парти обкомĕсене партин йертсе пыракан оргăнĕсен суйлавĕсене йĕртсе пырассине тĕпренех лайăхлатма хушнă.

(ТАСС).

Суйлава хатĕрленеççĕ

ШĂХАСАН. Партин йĕртсе пыракан оргăнĕсен суйлавĕсене ирттерме райком план тунă. Пуçламĕш организацисенче отчотпа суйлав пухăвĕсем апрелĕн 20-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Пуçламĕш организацисене тата парторгсене отчот хатĕрлеме пулăшма райком членĕсене çирĕплетнĕ.

Парторгсемпе кандидатсен групписен руководителĕсен канашлуне туса ирттернĕ. Пуçламĕш организацисенче ПСК(б)П Тĕпкомĕ „Партин йĕртсе пыракан оргăнĕсен суйлавĕсене ирттересси çинчен" йышăннă постановленине, суйлав ирттермелли инструкцине сÿтсе йавнă.

С. Соколов.

Йалсоветĕ йĕртсе пынипе

Уйкас Кипек йалсоветне (Шăхасан р.) икĕ колхоз кĕрет.

Иртнĕ çулта икĕ колхозĕ те вăтам шутпа гектартан 15 центнĕр тĕштыра туса илнĕ.

Кăçал вĕсем хăйсен умне гектартан 100—120 пăт тĕштыра туса илес задачă лартрĕç. Çак задачăна пурнăçлас тĕлĕшпе колхозсем пĕр-пĕринпе социалисăмла ăмăртса ĕçлеççĕ.

Колхозниксем ĕçре тăрăшса ĕçленипе пĕрлех хăйсен агротехникăла пĕлĕвĕсене те хăпартса пыраççĕ. Йалсоветра агротехникăна вĕренмелли 2 кружок ĕçлет. Вĕсенче 75 çын вĕренеççĕ. Икĕ колхозĕ те çуракине хатĕр. Вăрлăхсене кирлĕ таран суртласа хатĕрлесе хунă. Колхозниксене уйрăм ĕçсем çумне çирĕплетнĕ. Кашни колхозник, колхозница çуракинче хăй мĕн ĕçлемелине тĕплĕн пĕлсе тăрать.

Колхозсем вăйлă тырпулăшăн хастарлăн кĕрешнĕ пекех, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине те вăйлăн ĕçлеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмели государствă планне пурнăçласа пыраççĕ.

Тельман йачĕпе тăракан колхозăн ăратлă сурăхсен ферминче иртнĕ çулта 290 сурăх пулнă. Халĕ фермăра 375 сурăх шутланать. Куйбышĕв йачĕпе тăракан колхозăн сĕт-çу ферминче ĕнесем ăратланса пыраççĕ. Халĕ фермăра 46 ĕне, вĕсем пурте ăратлă.

Таварлă фермăсем колхозсене пысăк тупăш параççĕ. Сурăх ферминчен 1937 çулта Тельман йачĕпе тăракан колхоз 11.000 тенкĕ тупăш илнĕ.

Колхозниксем сысна, сурăх, чăх-чĕп, хур-кăвакал йышлăн усраççĕ.

Ĕне усраман колхозниксен йышĕ çулсеренех чакса пырать. Колхозниксене пурне те ĕнелĕ туса ситерме кăçал колхозсем 11 пару контрактациленĕ.

Культурлă пурнăç йалана кĕрсе çитрĕ. Икĕ колхозра та пысăк та илемлĕ клубсем лартнă. Вĕсенче час-часах спектакльсем, вечĕрсем пулаççĕ. Вăрман Кипеке—150, Уйкас Кипеке—150 екземпльар тĕрлĕрен хаçат-журналсем килсе тăраççĕ.

Хут пĕлменнисем икĕ йалсоветĕнче пĕтĕмпе 63 çын шутланаççĕ. Вĕсене пурне те вĕренĕве хутшăнтарнă. Шкул çулне çитнĕ ачасем пурте шкулсене вĕренме çÿреççĕ. Культура секцийĕ хăй ĕçне пит йĕркелĕ туса пырать. Секци руководителĕ парторг Абрамăв йулташ секци членĕсемпе час-часах канашлусем туса ирттерет. Колхозсенче, клубсенче, библиотекăсенче пулать. Колхозниксем хушшинче докладсем туса парать.

Хальхи вăхăтра РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕренеççĕ. Колхозсенче суйлав Положенисене вĕренме 10 кружок организациленĕ. Вĕренĕве 400 çынна хутшăнтарнă. Суйлавçăсем хушшинче ĕçлекен агитатăрсем пурте Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн парăнса ĕçлекен йулташсем.

Иртнĕ çулта йалсовет председателĕнче ĕçленĕ Чикмйаков йулташа кăçал парти райкомĕ районна ĕçлеме куçарчĕ.

Халĕ йалсовет председателĕнче ĕçлекен А. Иванов йулташ малтан колхозра бригадир пулса ĕçленĕ. Унăн бригади йаланах малта пынă.

Висĕ çул хушшинче Уйкас Кипек йалсоветĕнче колхоз председателĕсем 2, бригадирсем—10, счетоводсем—3, звеноводсем 3, ферма пуçлăхĕсем 4, выльăх-чĕрлĕх специалисĕсем 4 çын вĕренсе тухнă. Вăл çынсем хальхи вăхăтра пурте ответлă ĕçсенче ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçне пит йĕркелĕн туса пыраççĕ.

В. Чернов.

Азербайджан артисĕсене, йурăçисене тата ташăçисене наградăсем панă

Апрелĕн 5-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче Мускавра Азербайджан искусствин вунăкунлăхне туса иртерне. Столицăна Азербайджансен М. Ф. Ахуадăв йачĕпе тăракан опĕрăпа балетăн государствă театрĕ, йурлакансемпе ташлакансен коллективĕсем, халăх инструменчĕсен оркестрĕсем, Азербайджан халăх йурăçисем-ашугĕсем, пурĕ 700 çын килнĕ.

Вунăкунлăх кунĕсенче Азербайджан халăхĕн революцилĕ паттăр кĕрешĕвне кăтартса паракан „Кер-Оглы", „Наргиз" опĕрăсене, лирикăлă опĕрă „Шах-Сенем" тата музыкăлă комеди „Аршин мал алан" лартса кăтартнă.

Вунăкунлăхра кăтартнă спектакăљсемпе концертсем пурте калама çук пысăк ăнăçлăхпа иртнĕ.

Азербайджансен опĕрă искусствине, Азербайджансен музыкине йуррине ташшисене аталантарса пырас ĕçре калама çук пысăк çитĕнӳсем тунăшăн ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиуме М. Ф. Ахундăв йачĕпе тăракан театра Ленин орденĕ парса наградăланă. Азербайджан СС Республикĕн халăх артисне—Гаджибекăв Узеир композитăра Ленин орденĕ парса наградăланă. Çавăн пекех Азербайджан искусствин вунăкунлăхĕнче пулнă артиссене, композитăрсене, художниксене, музыкантсене, ташă ăстисене, ашугсене пурĕ 50 çынна Сойуз орденĕсене парса наградăланă.

Гаджибекăв, Глиер композитăрсене тата Азербайджан СС Республикĕн халăх артисĕсене Мамедăвпа Шевкет Мамедăвăна ССР Сойузĕн Халăх артисĕн йатне памала тунă.

Кунсăр пуçне Азербайджан искусствин вунăкунлăхĕнче пулнă М. Ф. Ахундăв йачĕпе тăракан театр работникĕсемпе Азербайджансен государствă филармони работникĕсене икĕ уйăхри ĕç укçи чухлĕ укçан премi парса наградăланă.

Вунăкунлăхра пулнисене чылайĕшне хаклă парнесем панă.

(ТАСС).

Большевикла çивĕч критикă

ДОН-ÇИ РОСТОВ, апрелĕн 18-мĕш. (ТАСС). Таганрогри „Хĕрлĕ котельщик" савăтри коммунисем парткомăн отчотлă докладне виçĕ кун хушши сӳтсе-йавнă. Прение 32 коммунис тухса каласнă.

„Хĕрлĕ котельщик" савăтри большевиксем ĕçри ситменлĕхсене мĕн пур хайарлăхпа тупса палăртнă.

Малтан директăр пулса ĕçленĕ, халĕ тăрă шыв çине кăларнă халăх тăшманĕн сăтăрла ĕçĕ çинчен коммуниссемпе партире тăман рабочисен сигналĕсем çине парткăм секретарĕ Портнов çавăрăнса та пăхман.

Епĕ хуçалăхла ĕçсене хутшăнмастăп, —тенĕ Портнов.

Хуçалăхла ĕçсене „хутшăнмалла мар" линийе тытса пырса, Портнов парторганизаци ĕçĕсем çинчен те тăрăшман. Ку вăл агитацилĕ-массăлă ĕçе пăрахăçа кăларнинче, парти кандидачĕсемпе сочувствуйушчисем хушшинчи ĕç çуккинче, партилĕ вĕренӳ пачах та çителĕксĕр тăнинче курăннă.

Парти пухăвĕ савăтри парти комитечĕн ĕçне çителĕксĕр тесе йышăннă. Парткомăн çĕнĕ составне кандидатурăсем тăратнă чухне Портнов хушаматне пĕри те асăнман. Парткомăн кивĕ составĕнчен вăрттăн сасăласа суйламали спискă пĕр çынна çеç кĕртнĕ.

Суйлавçăсен политикăлă активлăхĕ пысăк

Армйан СС Республикĕн Верховнăй Совет суйлав кампанийĕ суйлавçăсем политикăлă пысăк активлăх кăтартнипе иртсе пырат.

Армйан СС Республикĕн суйлав саккунĕпе Конституцине вĕренмели кружоксене çĕнĕрен вунщăрăн та çĕршерĕн туни çинчен кашни кунах пĕлтерӳсем пыраççĕ.

Халљхи вăхăтра ик-виç кружок ĕçлемен йал республикăра çук та.

Республикăн суйлав саккунĕпе Конституцине пĕтĕм Армени тăрăх 400 пин суйлавçă ытла вĕренет.

(ТАСС).

Футболиссен вăййисем

Апрелĕн 18-мĕшĕнче Мускавпа Ленинградри стадионсенче футболиссĕн çуркуннехи вăййисем пуçланнă. Çав кун Мускавра футбол командисем пурĕ 150 командăна йахăн выљанă. Футболиссем выљанине курма ĕççыннисем пиншерĕн пынă.

(ТАСС)

Хут çинчи çекцисем

ЕЛĔК. Изванкă йалсовечĕ çумĕнче 10 çекци шутланат. Анчах вăл çекцисем начар ĕçлеççĕ.

Финанс çекцийĕ (руководителĕ Çĕменăв йулташ) хăйĕн членĕсене йертсе пымаст, вĕсене пухса пĕрре те каласман.

Финанс çекци ĕçлеменнипе йалсоветĕнче укçа-тенкĕ пухасси кайа йулса пырат.

Уйкас колхозĕ (предçедателĕ Васийĕв) тата Йаружкă колхозĕ (предçедателĕ Иванов) укçа-тенкĕ пухмали плана вăхăтра тултарма чăрмантарса пыраççĕ. Ку вăхăта çитиччен Уйкас колхозĕ тупăш налогне 212 тенкĕ, Йаружкă колхозĕ 130 тенкĕ тӳлесе татман.

Тата хăшпĕр колхозсен предçедателĕсем хăйсен хуçалăхĕсем тӳлемели укçа-тенкĕне те тӳлемеççĕ. Акă Йажуткă колхозĕн предçедателĕ Аниçимăв йулташ куљтсбор укçине 27 тенкĕ парса татман. Çавнашкалах районри вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекен Андрей Аниçимăв йулташ йалхуçалăх налогĕ 33 тенкĕ, куљтсбор укçи 27 тенкĕ, страховкă укçи 18 т 23 пус тӳлесе татман.

Йалсоветĕнче, çитĕннисене вĕрентес ĕçпе уйрăм çекци тунă. Анчах ку çекци те (руководителĕ вулăв çурчĕн пуçлăхĕ Йефимăв йулташ) нимĕн те тумаст. Çавăнпа та ĕнтĕ çитĕннисене вĕрентмеççĕ. Кунта хут пĕлменнисем 92 çын, сахал пĕлекеннисем 90 çын пур. Вĕсене феврањ уйăхĕн малтанхи кунĕсенче вĕрентме тытăннă пулнă. Виç-тăват кун вĕрентсенех ĕç чарăннă. Халĕ, вĕрентекенсем Уйкасра—Корбунов, Тимĕрçкассинче—Иванова, Йалкăшра—Алексейĕв тата Изванкăра—Борисăв йулташсем вĕрентме тытăнасси çинчен аса та илмеççĕ.

Йалсовет предçедателĕ Йегорăв йулташ çекцисен ĕçĕсене йĕркелесе йарас тĕлĕшпе нимĕн те тумаст. Вăл ку вăхăта çитсе те çекци руководителĕсемпе ĕçе йĕркелесе йарасси пирки калаçусем туса иртермен.

Ф. Филиппăв.

Май уйавĕ умĕн

СĔНТĔРВАРРИ. Аслă Хуракассинчи „Социалисăм" колхоз клуб çуртне туса пĕтерчĕ. Халĕ клуб çумĕнче политикăлă кружок организациленĕ. Вăл кружокра колхозниксемпе йединоличниксем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренеççĕ. Çавăн пекех клуб çумĕнче драмкружокпа струннăй оркестр кружокĕсем те ĕçлеççĕ.

Кружоксем халĕ Майăн 1-мĕшне хатĕрленеççĕ.

Никитин.

Астрăхаљрен Атăл тăрăх тăвала кайма пăрахутсем, каравансем тухнă.

(Сойузфото).

Агитатăрсен семинарĕ

ТРАК. Йаманак йалсоветĕнче суйлав саккунĕсене вĕрентес ĕçе лайăх туса пыраççĕ. Кружоксен занятийĕсене çӳремен çынсем патне килне çӳресе суйлав саккунĕсене ăнлантараççĕ. Çамрăксем суйлав ыйтăвĕсем пирки ыйтусемпе ответсен каçĕсем иртереççĕ. Суйлав Положенисене вĕрентес ĕçре кашни 10 килрe пĕр агитатăр ĕçлет. Агитатăрсен пĕлӳне хăпартас тĕлĕшпе час-часах агитатăрсен семинарĕсем туса иртереççĕ. Çак кунсенче агитатăрсен семинарĕ пулса иртрĕ. Семинарта 76 агитатăр пулчĕ.

М. Иванов.

Каннă вăхăтра

ТУТАРКАС. Пушкăрт йалĕнчи „Çĕнĕ çул" колхоз апрелĕн 12-мĕшĕнче клевĕр акрĕ. Клевĕр акас плана пурнăçласан 1-мĕш бригадăн бригадирĕ Мефоди Вăжурăв йулташ клевĕр акакан колхозниксене уйрах РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленесси тата тĕнчери лару-тăру çинчен хаçат вуласа ăнлантарчĕ.

Халĕ колхозра кĕрхи тырăсене апат пама катка-пичкесем хатĕрлеççĕ. Вĕсем хушшинче те агитатăрсем суйлав саккунĕсем çинчен каласа ăнлантараççĕ.

Г. Шарăв.

4 пин тенкĕ пулăшу

Пантăк йалĕнчи (Хĕрлĕ Чутай р.) Ксени Максимăвă—сичĕ ача амăшĕ. К. Максимăвă государствăран иккĕмĕш хут—2 пин тенкĕ пулăшу укçи илчĕ. Çав укçапа вăл ачисене лайăх тумлантарчĕ, учебниксем çителĕклĕ илсе пачĕ. Максимăвă çемйи партипе правительствăна пĕтĕм чĕререн тав тăват.

А. М-в.

Тепĕр насус илчĕç

Супар колхозĕ (Трак районĕ) çумĕнчи пушарпа кĕрешекен ирĕклĕ дружинă тăрăшнипе, Совет Сойузĕнчи пушар охрани XX çул тултарнă йатпа, колхоз пурлăхне сыхлас ĕçе вăйлатма çĕнĕрен тепĕр насус илчĕ. Хальхи вăхăтра колхозра икĕ насус. Ирĕклĕ дружинă, уйрăмăнах дружинă начальникĕ Кондратйĕв йулташ тăрăшса ĕçленипе, колхоз пурлăхне вуткăвартан çирĕп сыхлат.

П. Афанаçйĕв.

Вулав çурчĕсем тăрăх

Хальхи вăхăтра РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕрентес ĕçре вулав çурчĕсене калама çук пысăк вырăн тивет.

Анчах республикăри вулав çурчĕсем ĕççыннисем ыйтнине пурнăçласа пыраймаççĕ-ха. Нумай чухне çапла пулат: вулав çурчĕсенче ĕçлекенсене „пĕчĕк работник" вырăнне шутлаççĕ, районсенче ĕçлекенсем те вара вĕсене пачар пулăшаççĕ.

Вулав çурчĕсем йалта културăлă-массăлă ĕçĕн вучахĕсем пулмала. „Хаçатсене саспа вуласа парасси, калаçусем ирттересси, ыйтусемпе ответсен каçĕсем ирттересси—çаксем ĕнтĕ политикăлă ĕçĕн лайăх, чи витĕмлĕрех формисем пулса тăраççĕ. Колхозниксен йышлă массисем хушшинче çав формăсемпе ĕçлесси чи ансатрах пулат", тесе çырат „Правда" хаçат. Вулав çурчĕсен çав формăсемпе сарлакан усă курмала та ĕнте.

Анчах, çав вăхăтрах, Сĕрпӳ районĕнчи Чурачăк, Йекĕрвар йалсовечĕсенчи вулав çурчĕсем хаçат-журналсемсĕр лараççĕ. Туçи йалсоветĕнче вулав çурчĕ (пуçлăхĕ Сотникăвă) пĕр уйăх ĕнтĕ питĕрĕнсе тăрат. Пысăк Чăрăш (Васийĕв), Паваркасси (Љвов), Нĕрĕш (Антенăвă) йалсовечĕсенчи вулав çурчĕсем Сталинла Конституцине, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене колхозниксемпе йединоличниксене ăнлантарса парас ĕçе пачах тытăнман. Урпашри вулав çуртĕнче нумайранпа радио ĕçлемест, хаçат-журналсем çителĕклĕ çырăнса илмен. Кружоксем ĕçлемеççĕ. Вулав çурчĕн библиотекинче колхозниксене илсе вулама йурăхлă кĕнекесем çук.

Елĕк районĕнче вулав çурчĕсем пурĕ 32. Вĕсенчен 15-шĕ колхоз правленисемпе йалсовет канцелярийĕсене вырнаçнă. Районра пĕр вулав çурчĕ те йĕркелĕ ĕçлемест-ха. Пиçенер йалсоветĕнчи вулав çуртĕнче доминоçăр пуçне, урăх нимĕн те çук. Вулав çурчĕн патефонне йалсовет председателĕ хăй патĕнче усрат.

Трак районĕнчи Тĕрер йалсоветĕнчи вулав çурчĕ иртнĕ çулта сметăпа пăхнă укçаран 40 проценчĕпе кăна усă курнă. Кĕнекесем, хаçат-журналсем çителĕклĕ мар. Вулав çуртне йалсовечĕ пулăшмаст.

Сураки çитрĕ. Сураки вăхăтĕнче избачсен културлă-массăлă ĕçе уйхир ĕç бригадине, трактăр отрйадне, агрегата куçармала. Вĕсенче хаçат-журнал вуласине, стена хаçачĕсем кăларассине организацилемеле. Халех политвулавçăсене уйăрса хатĕрлемеле. Политвулавçăсене валљи колхоз правленисен хаçат-журналсем çителĕклĕ çырăнса памала.

Колхозниксемпе йединоличниксем тĕнчере пулса пыракан событисем çинчен нумай ыйтаççĕ, вĕсем хамăр çĕршыври хыпарсене вăхăтра пĕлесшĕн. Ĕççыннисене интереслентерекен пур ыйтусем тăрăх вăхăтра та татăклă ответсем памала.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали тапхăр çывхарат. Сталинла Конституципе суйлав Положенине вĕренме вулав çурчĕсем çумĕнче кружоксем организацилемеле, хаљ ĕçлекен кружоксене вăйлатмала, унта колхозниксемпе йединоличниксене Конституципе суйлав саккунĕн кашни статйине тĕплĕн ăнлантарса памала.

Массăлă-политикăлă ĕçе большевикла йĕркелесе, ĕççыннисен социалисăм отроительствинчи активлăхне тата ытларах çĕклер, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне нихăçан пулман çĕкленӳпе ирттерер!

Ухута срукĕсемпе правилисем çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Чăваш АССР территорийĕнче тискер кайăксемпе вĕсен кайăксене тытмали ухута срукĕсемпе правилисене—1937 çулта пулнисенех хăварса тата çакăн пек улăштарусем туса йышăннă:

1. Ухута срукĕсем:

Кăвакал аçисене вĕççе килнĕ кунран майăн 13-мĕшчен тытма йурат—йăхăрмалипе, клеткăсемпе тата йăхăракан кăвакалсемпе усă курса;

Кăрăпчаксене (вальдшнепсене) тагăра—килсен пуçласа майăн 19-мĕшĕччен;

Асан автанĕсене токра—ток пуçлансан майăн 13-мĕшĕччен;

Вăрманти тата шурлăхсенчи-кӳлĕсенчи кайăксене—ийулĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа; Мулкачсене — октăберĕн 18-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 15-мĕшĕччен;

Тилĕсене—нойаберĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 15-мĕшĕччен;

Ытти тискер кайăксене: пакшасене, йуссене, шăши йуссене, сăвăрсене—нойаберĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 15-мĕшĕччен.

2. Тытма йурамаст:

Пăшисене, сăсарсене, ăтăрсене, шашкăсене, карăксене, пăчăрсене—çулталăкĕпех тытма йурамаст, йурлакан кайăксемпе ытти усăллă кайăксене те пеме йурамаст.

Асан амисене октăберĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ийулĕн 30-мĕше хушшинчи вăхăтра тытма йурамаст.

Кайурасене майăн 10-мĕшĕпе ийулĕн 1-мĕшĕ хушшинчи срукра тытма йурамаст.

МАЉАРИ ЧИРĔПЕ КĔРЕШЕССИ

Кăçалхи çул сывлăха сыхлас ĕç оргăнĕсем умне маљари (сивле) чирĕпе кĕрешес ыйтăва уйрăмах çивĕччĕн лартнă.

Чăваш республикĕ ку тĕлĕшпе укçатенкĕ те, маљари чирне пĕтермели медикаментсемпе аппаратурă та чылайах илчĕ. Халĕ тата автомашинăсемпе ытти наха ĕçхатĕрĕсене илме палăртнă.

Маљарипе кĕрешекен учреждениссен йышĕ сарăлсах пырат, республикăра хаљ ку йенĕпе 3 станци, 7 пункт ĕçлеççĕ. Кусемсĕр пуçне, çулахи кунсенче маљарипе кĕрешекен вăхăтлăх отрйадсем ĕçлеме пуçлаççĕ. Маљари чирĕ вăйлăн сарăлнă районсенче участкăри пуљницăсем çумне маљарипе кĕрешме йатарласа йалавлăх тунă бригадăсем çирĕплетнĕ. Вăл бригадăсенче бонификатăрсемпе хинизатăрсем тăраççĕ. Бригадă, участкăри врач кăтартса панă тăрăх, хăйĕн участкисенче пĕтĕм сывлăхлатас тата маљари чирĕн йăвисене пĕтерес ĕçе туса пырат. Çакнашкал бригадăсем Куславкка районĕнче 3, Улатăр районĕнче—2, Пăрачкăвра—1 ĕçлеççĕ.

Сивĕ чирĕнчен тасалас йенĕпе ĕççыннисем пысăк пулăшу илеççĕ. Совет çĕршывĕнче тунă акрихин маљарине пĕтермелли питех те паха емел пулса тăрат. Ăна хаљ пур районсенче те чылайах панă. 1937 çулта маљарипе чирлесе иртернĕ çынсем, чир çĕнĕрен пуçланассинчен сыхланас май, çак апрел уйăхĕнче пурте обиазатĕлнă йĕркепе емелленме çӳремеле. Маљарипе вăйлăн чирлесе кайма пултаракансене чир пуçланасран акрихинпа емеллеме лекет.

Çак çулта чирлесе кайнисене тата камăн йунĕнче маљари паразичĕсене тупнă, вĕсене пурне те акрихинпа йе хининпа куллен йĕркелĕн емеллеме тытăнмала. Çулахи вăхăтра чирлисене акрихинпа плазмоцида пĕтĕçтерсе емеллемеле пулат. Плазмоцид (симĕс таблеткă) вăрăм тунă çыртса чир йертесрен сыхланма лайăх пулăшат.

Маљари чирĕ йернипе йерменнине çийĕнчех пĕлес тата унран вăхăтра тасалас шутпа, кăçал 250.000 çынна тĕрĕслесе тухатпăр. Вăл хисепе шкулсемпе ытти ача-пăча учрежденийĕсенчи ачасен йышĕ те кĕрет. Ачасене акрихинпа емеллес ĕçре педагогсемпе ача сачĕсенче ĕçлекенсем пулăшаççĕ.

Тĕрĕслĕве маљарипе кĕрешекен врачсем çеç мар, медицинăн ытти облаçĕнче ĕçлекен врачсемпе вăтам медперсонал та хутшăнаççĕ.

Медицинă работникĕсене пулăшма колхозсем хинизатăрсем (акрихинизатăрсем) уйăрса параççĕ. Хинизатăра колхоз кунне 0,75 ĕçкунĕнчен пуçласа 1,25 ĕçкунĕ таран тӳлет.

Маљари чирне йертекен вăрăм тунă тĕвви сарăлнă шурлăхсемпе шывшурсене кăçалхи çул малтанхи хут пуçласа парижйуссипе (парижская зелень) сапатпăр. Маљарипе кĕрешме йатарласа хатĕрленĕ работниксем— бонификатăрсем питех те нумай кирлĕ пулаççĕ.

Правительствă кăтартса пана тăрăх, маљари сарăлнă районсенче хуçалăх организацийĕсем, чирпе кĕрешес сезонра, бонификатăрсем уйăрса, вĕсене хăйсен (организацисен) шучĕпе тытмала. Бонификатăрсем пурлăхсене, вăрăм тунă тĕвви сарăлнă шыв-шурсене нефт тата вăрăм тунана пĕтерекен ытти емелсем сапаççĕ. Шыв-шурсене, çырма-çатрасене йусас, тасатас йанĕпе вак-тĕвек ĕçсене тăваççĕ. Пӳрт-çуртра вăрăм тунасене пĕтерес ĕçе йĕркелеççĕ. Вĕсен задачи пысăк та ответлă. Бонификатăрсене колхозсем те уйăрмала.

Нефт тата ытти емелсем сапма палăртнă шыв-шур лаптăкĕсем кăçал ытти çулхисенчен нумай ытларах пулаççĕ.

Маљарипе кĕрешнĕ çĕрте гидротехникăла ĕçсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Ку йенĕпе сывлăха сыхлас ĕç оргăнĕсем тата хуçалăх организацийĕсем туса ирттерекен пысăк ĕçсемсĕр пуçне, гидротехникăри çăмăлрах ĕçсене ĕççыннисем хăйсем тăваççĕ. Техникă йенчен йертсе пырассине, стройматериалсем илме укçа парассине тата ĕçлекенсене ĕçукçи тӳлессин хăшпĕр щийне маљарине кĕрешекен организаци хăй çине илет.

Гидротехникăлă ĕçсене организацилемелле нумай колхозсемпе договăрсем тунă.

Çунатланнă вăрăм тунапа кĕрешесси хĕлле пуçланнăскер, çуркуннепе çулахи вăхăтсенче тата ытларах вăйланмала. Вăрăм тунана пĕтермели емелсене—флицидпа анофелицида самайăх хатĕрлесе хурса, вĕсене тивĕçлĕ районсене йанă.

Ачасене уйрăмах пысăк тимлĕх кирлĕ. Çулахи лагĕрсене уçас умĕн, ку тĕлĕшпе ĕçлекен организацисем маљарине хирĕç мĕн пур кирлĕ ĕçсене туса ирттермеле—лагĕрсем валљи лайăх, сывлăхлă, таса вырăн суйласа илмеле, лагĕр таврашĕнчи вырăнсене тĕплĕн емеллесе тасатмала, çунатланнă вăрăм тунана пӳрт-çуртран тасатас тĕлĕшпе куллен ĕçлесе пымала, пӳрт-çуртсен чӳречисене вĕтĕ çеткă карса тухмала.

Маљарипе йăвăр чирленисене йĕркелĕн емеллесе пымала, май килнĕ çĕрте сывăрмали вырăн çине шăналăк кармала.

Маљари чирĕнчен сыхланас май, хăшпĕр çĕрте лагĕрти мĕн пур ачасене акрихинпа емеллемеле пулат.

Маљари чирĕ республикăра нумай сарăлнă. Ку инкекпе кĕрешме медицинă работникĕсен çеç мар, мĕн пур хуçалăх организацисен, колхозсен, совхозсен, общĕствăлă организацисен, советсен çĕкленмеле. Маљарипе кĕрешес ĕç—государствăн пысăк та ответлă ĕçĕ. Ăна пирĕн тимлĕн те йĕркелĕн туса пымала.

Доктăр Н. Луппăвă.

Йединоличниксем колхоза кĕреççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Мăн Йаваш йалсоветĕнче суйлав Положенисене вĕренме 8 кружок организациленĕ. Йалсовечĕпе 21 агитатăр ĕçлет.

Ачкасси йалсоветĕнче суйлав Положенисене 12 кружокра вĕренеççĕ. Заљатисем йĕркелĕ пулаççĕ. Агитатăрсем, суйлав Положенисене вĕрентнипе пĕрлĕх, хаçатсем çинчи çĕнĕ хыпарсене каласа ăнлантараççĕ. Йалсоветра ĕçлекен 15 агитатăрĕ те ПСК(б) Парти райкомĕ çумĕнче агитатăрсен курсĕнчен вĕренсе тухнă.

Уйпуç йалсоветĕнче суйлав саккунĕсене пысăк хаваслăхпа вĕренеççĕ. Кунта 36 кружок ĕçлет.

Ку йалсоветри агитатăрсем суйлав саккунĕсене вĕрентнипе пĕрлĕх хуçалăхла-политикăла кампанисене вăхăтра пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Районри ытти йалсовечĕсенчи агитатăрсем те Уйпуç йалсоветĕнчи агитатăрсем пек политикăла агитацилĕ, массăлă ĕçе анлăн туса пынипе, çак кунсенче районра 18 йединоличник хуçалăхĕ колхоза кĕнĕ.

Й. Çигайĕв.
Й. Самарин.

Выљăхсене прививкă тăвасси çинчен

Шупашкар Хула Совечĕн президиумĕ „Выљăхсене чир-чĕртен сыхланмали прививкă тăвасси çинчен" йатарласа постановлени йышăннă. Çав постановлени тăрăх, хулара выљăх-чĕрлĕх (лашасем, майракалă выљăхсем тата сыснасем) усракан пĕтĕм учрежденисен, предприйатисен, кооперативлă тата ытти общĕствăлă организацисен, çавăн пек граждансен выљăхĕсене çĕпĕр чирĕпе чирлесрен, сыснасене рожă чирĕпе чирлесрен прививкă тутармалла. Кунсăр пуçне лашасене сап чирĕпе, майракалă выљăхсем [illegible] целљоз чирĕсемпе чирлесрен тĕрĕслеттермеле.

Выљăх усракансен хăйсен выљăхĕсене хула çĕрĕç пайĕ кăтартнă вăхăтра ветеринари пунктне прививкă тутарма тата тĕрĕслеттерме илсе каймала.

Ответлă редактăр Н. СЕМЕНАВ.

Çĕмĕрлери райпромкомбината
ЙАЛАН ĔÇЛЕМЕ КИРЛĔ:
Аслă бухгалтĕр 1
Инженер-механик 1
Плановик-економист 1.
Хватер пур. Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх
3—3 Дирекци.

ГОСБАНКĂН
Чăваш Республикĕнчи Кантурĕ
Ĕçпе Оборонă Совечĕн 1932 çулти йанварĕн 1-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕ тăрăх, Вăрнар йалпоне (Вăрнар районĕ) тӳлеме пултарайман организацисен спискине кĕртнĕ. Кун çинчен асăннă йалпона тавар таратакан тата ытти йенĕпе те çыхăнса тăракан организацисене пĕлтеретпĕр.
Госбанкăн Чăваш республикĕнчи кантурĕ.

Пĕлтерни

Апрелĕн 21-мĕшĕнче каçхине 7 сехетре Верховнăй суд çуртĕнче (Хĕрлĕ площчĕд) Шупашкарти учрежденисенчи, предприйатисенчи бухгалтĕрсен тата Государствă кивçенлĕхĕпе перекет ĕçĕсене пулăшакан комиссси членĕсен канашлăвĕ пулат. Канашлура—ССР Сойузĕн оборонине тĕреклетмели займа çырăнса илнисемпе расчот тăвас ыйтусене сӳтсе-йаваççĕ.

Комиссси членĕсен тата бухгалтĕрсен обиазатĕлнă пымала.

Академи театрĕнче
Апрелĕн 20-мĕшĕнче
Чăвашла спектакăљ
Н. Н. ОÇИПĂВ
„АЙДАР"
(5 пайлă, прологлă)
Аслă режиççор
К. И. ИВАНОВ
тата режиççор
Н. С. АЙЗМАН лартаççĕ.
Художник
Йе. Н. САПОЖНИКĂВ.
Çпектакăљре музыкăна Государствă филармонийĕ выљат.
Дирижор—Г. ЙЕГОРĂВ.
Талон № 171.
Абонемент № 2 талон № 15.
Кассă кăнтăрла 3 сехетрен усă.
Çпектакăљ каçхине 8 сехет те 30 минутра пуçланат.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене каялла памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 202 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 301. 25—94 см. 1—1 п. л.